28-115

ТРУПИНА М.

КАНАШ СОЙУСӖН ИЛЕМЛӖ ЛИТТЕРАТТУРӐ ӐМӐРТӐВ. Б-МӖШ ПРЕМИ ИЛНӖ

# ҪӖНТЕРЂӖ

ВИҪӖ ПАЙЛӐ ТРАМӐ

ЂӐВАШ КӖНЕКИ УЙРАМӖ
ШУПАШКАР 1928

ТРУПИНА МАРХВИ

# ÇĔНТЕРҪĔ

ВИÇĔ ПАЙЛĂ ТРАМĂ

Канаш Сойусĕн илемлĕ литтератtурă ăмăртăвĕнҫе 5-мĕш преми илнĕ

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

ШУПАШКАР — 1927

Отпечатано в типография
школы Ф. З. У. Чебоксары,
Чувашлит № 2085.
Тираж 3000 экз.
Зак. № 20.

## Пйессăри çынсем.

1. Марик инке—тăлăх, ђухăн арăм 40—42 ç.
2. Прaççи—18 çулхи ђипер хĕр ⎫ Марик ин-
3. Лексантăр—15 çулхи ађа ⎭ ке ађисем
4. Иљакка—йал пуйанĕ. Кĕрĕ сывлăхлă çын, 48—50 çулта. Совета кураймасť, турра хытă ĕненет. Мăн сасăпа калаçаť. Хĕрлĕ кĕпепе, хура шараварпа, атăпа, пустав тумтирпе çўрет.
5. Кеорки—салтака кайма çитĕнсе çитнĕ çамрăк çын—Иљакканăн кĕçĕн ывăлĕ. Аван тумланаť.
6. Йакур—салтак ађи. Йалта револђутсиллĕ шухăшлă çамрăк çын.
7. Наçтаç—Иљакка патĕнђе пурăнакан ватă хĕр.
8. Пахтиар—вак-тĕвек тавар, емел таврашĕ сутса çўрекен тутар.
9. Ђăмаппи—вĕлтĕркке сухаллă, çинçе саслă çармăс.
10. Отрет пуçлăхĕ.

*Салтаксем, пионерсем, халăх.*

*Ĕçсем Атăлтан инçе мар тђăваш йалĕнђе пулса иртеççĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш пайĕсем 1918-мĕш çулта, кĕркунне, Хĕрлĕ Çара мопилиçатсиленĕ вăхăтра, виççĕмĕш пайĕ октăпĕр револђутсийĕ 10-мĕш çул çине пусnă кун пулса иртеççĕ.*

## I-мĕш пайĕ.

*Стсенă — Марик инке пÿртђĕ. Урамалла пĕр кантăк. Пÿртђĕ пĕтђĕкçĕ, тăвăр. Сĕтел, сак пур. Сылтăм йентђе кăмака. Кăç пулса килет. Марик инке кăмака умĕнтђе хуранти пăттине пăтратса тăрать. Лексантр аллине кашăк тытнă, амăшĕ патĕнтђе йавкаланса çÿрет. Праççи кантăк патĕнтђе, сак çинтђе тђăлха сыхса ларать.*

Лексантăр (*хурана пăхса*). Пиçет-и пăтă? Пит çийес килет (*кашăкне хурана тђиксе йарать*).

Марик инке (*ывăлне сĕлтсе*). Ан кансĕрлесе тăр, кай! (*пăттине пăтратать*).

Лексантăр (*кашăкне çуласа*). Ĕнер иртенпе нимĕн те çимен те, пит çийес килет. Пăтти лăкăртатнипе пушшех çийес килет. Выçăпа пыршăсем пĕр пĕрне турткалаççĕ пулмалла: ытла ђăрлатаççĕ.

Марик инке (*хурлăхлă сасăпа*). Ей, ађам, пирĕн кунĕ-кунĕпе апат çимесĕр иртни пайан çеç марçке (*пăттине сыпса пăхать*).

Праççи. Пиçрĕ пуљ ĕнтĕ, антар анне (*урамалла пăхса илсе*). Çийес те, салтак ађисем çÿренине курма урама тухас (*тђăлхине кантăк умне хурать те, сĕтел çине тђашăк-тирĕк илсе пырса лартать*).

Марик инке. Пăттине пĕçересси пĕçертĕмĕр те, çусăрах çийес пулать (*хуранне антарса сĕтел патне илсе пырать*).

Лексантăр (*сĕтел хушшине кĕрсе ларса*). Çусăр та йуратˇ пире. Кăвакалăн пек пыршă тултăр. Выçăпа вар-хырăм пит ђăрлататˇ. (*Марик инкепе Прасçи пăтта хурантан ђашăк çине антарса сĕтел хушшине кĕрсе ларасçĕ. Пурте çиме тытăнасçĕ*).

Марик инке. Выçăпа тарăхтарсах çакăн ђухлĕ ӳстертĕм сире, ађасем... Ех, пĕр кашăк çу пулинђђĕ. Кађака та пулин усраймастпăр... Кађака усрасан ахăртнех кăшт çăвĕ те пулĕђђĕ.

Лексантăр (*пăтта пĕриккĕ сыпатˇ те, кашăка шаклаттарса хуратˇ*). Темскер кăђăртататˇ.

Прасçи (*çиме ђарăнса*). Кăђăртататˇ çав...

Марик инке (*çикелесе*). Мĕн пурши унта? Те кĕл сирпĕнђĕ. Манăн шăлĕсем те çукрах та, епĕ кăђăртатнине пĕлместĕп.

Лексантăр (*сĕтел хушшинђен тăрса*). Çиме те май çук! Пит кăђăртататˇ! Ăпђху! (*сурса çăварне кĕпе çаннипе шăлатˇ*). Çăвара хăйăр тултарнă пекех туйăнатˇ. Ăçта-ха, кĕрпине пăхас! (*пӳртрен хăвăрт тухса каяĭтˇ*).

Марик инке. Мĕн амак-ши вăл кăђăртатаканни?

Прасçи (*кашăк çинђи пăттине пăхса*). Кунта нимĕн те курăнмастˇ.

Лексантăр (*ывăçпа кĕрпе илсе кĕретˇ*). Кĕрпе кăђăртататˇ. Çисе пăхрăм. (*Марик инке, Прасçи, Лексантăр аллинђи кĕрпене сиркелесе, çикелесе пăхасçĕ*).

Прасçи. Хăйăр пур, шултра хăйăр.

Лексантр. Ђăнах та хăйăр, Атăл хăйăрĕ. Акă, анне, пăх (*пўрне вĕçĕнтђи хăйăрсене кăтартать*).

Марик инке (*тĕлĕнсе*). Ай-ай тур! Шуйттан Иљакки! Вир кĕрпи çине хăйăр йанă пулĕçке (*пĕççине çапса илсе*). Ай пĕтрĕмĕрех! Пĕтрĕçке, пĕтрĕ виçĕ пăт кĕрпе-е!..

Праççи. Ыраш çăнăхне пăхас. Вăл та кăђăртатмасть-и?

Лексантăр. Илсе кĕрем-ха (*хăвăрт тухса кайать*).

Праççи. Ахалех сайа карĕ ку пăтă.

Марик инке. Ан та кала, ађам. Ахалех сайа кайать çав. Ђăх-ђĕп, сысна пулнă пулсан вĕсене параттăмăр, нимĕн те çук...

Лексантăр (*кĕрет, хăй çăнăх ђăмлать*). Ыраш çăнăхĕ те кăђăртатать.

Праççипе Марик инке (*харăс*). Ђăнах-и?

Лексантăр. Ђăнах кăђăртатать. (*Çăнăха ывăçи çинтђен сĕтел çине хурать. Марик инкепе Праççи çăнăха сиркелесе, çикелесе пăхаççĕ*).

Марик инке. Ах, пĕтрĕмĕрçке, пĕтрĕмĕр! Мĕн çисе хĕл каçăпăр!..

Праççи. Иљакка патĕнђе çу каçа виççĕн тан ĕçлени ахалех сайа кайрĕ. Мăшкăларĕ вăл пире.

Лексантăр. Мăшкăлас тенĕ çав. Йурать кусене, кĕлмĕçсене, хăйăр та терĕ пуљ.

Марик инке (*сĕтел çине ђавсаланса хурлăхлă ларать*). Иљакка пире мăшкăлани хаљ çеç мар та, анђах ним тума çук... Ăшăмра йаланах: кайса кĕрес

мар çав Иљакка патне, тетĕп, çыхланас мар... Анђах çитмен пурăнăç хăвалаť.

П р а ç ç и (*сĕтел çинтђен тђашăк-тирĕк пуçтарса*). Пайан çимех нимĕн те çукçке-ха.

М а р и к  и н к е (*хурлăхлă*). Çав çав, çу-ук. Мĕн çитерем-ши сире?

Л е к с а н т р (*çĕтĕк сăкманне тăхăнса*). Выçă хырăмпала килте пушшех ларасси. Кайас пуђ йал касма. Шкула кĕрсе хаçат вулас-ха. Ех, пĕреххут хăçан хĕрлĕ çара кайма çул çитĕ-ши? Килтен тарасђĕ (*тухса кайаť. Праççи кантăк патне тђăлха çыхма лараť*).

П р а ç ç и (*тарăхса*). Епĕр ытла та хĕнпе пурăнатпăр. Пирĕн хура кĕртенех çимелли çук, выçă тарăхатпăр.

М а р и к  и н к е (*вăрăмăн сывласа*). Ăçтан пултăр, ађам. Ырашне хăрах йăран*) çеç вырса илтĕмĕрçке. Тырри 7 пăт кăна пулђĕ те, халĕ çисе йатăмăрçке... Çуртырри акаймарăмăр: вăрлăхĕ пулмарĕ.

П р а ç ç и. Пĕреххут пахђана та çĕрулми хамăр лартаймастпăр, Иљакка лартаť.

М а р и к  и н к е. Тĕкĕннĕ пурăнăçа аталантараймастпăр. Кăçал хĕлле 4 çурпилĕк ыраш кађђине Иљаккана 8 пăт çăнăхлах памалла пулђĕ. Мĕн çисе хĕл каçăпăр?! 3 пăт кĕрпе, 11 пăт çăнăх Иљаккаран ĕçленĕшĕн илсен хĕл каçкалăпăр теттĕм... Çăнăхĕ те, кĕрпийĕ те путлĕ пулмарĕ...

*) Ана виçи—3½ ђалăш урлăшĕ, 100 ђалăш тăршшĕ.

Прaççи (*тарăхса*). Мĕн пирĕн пурăнни! çитменнипе ана-çарана тара паратпăр та, вара хамăр çу каçипех çын ĕçне ĕçлетпĕр. Хĕле кĕрсен авăрламалăх сӳс-кантăр çук. Çынсем ваљђи ђăлха çыхса вăхăт иртет. Ах, мĕншĕн пурши еп!..

Марик инке. Ан кала, ађам! Ђĕрене ан ыраттар. Çитмен пурнăç хăйне хăй тĕкĕнсе пырать (*сĕтел хушшинђен тухать*). Мĕн тăвас-ха, мĕн тăвас?! Пайанах мĕн çитеремши сире? (*ђарăнса тăрса*). Паçук кинсем патĕнђен çăкăр кайса илес пуљ (*кивĕ сăкман тăхăнса тухса кайать*).

Прaççи (*пĕђђенех, паçăрхи пекех ђăлха çыхса*). Ах, тур! Çынсен хĕрĕсем темĕнђухлĕ пиравăр тăваççĕ. Епĕ пур-çукпа тарăхсах иртеретĕп пуљ. (*Вăрăмăн сывласа илсе хурлăхлă йурлать*).

Мамăк минтер хăпармасть,
Çийелти пиђĕ тăвăртан (2 хут).
Манăн ђунăм савăнмасть,
Пĕђĕкрен çукпа пулнăран... (2 хут).

Çынсен хĕрĕсем йусанаççĕ, манăн виçĕ кĕпе те çук... (*Урамра хут купăс сасси хуллен илтĕнет. Праççи кантăка уçса урамалла пăхать*). Урлă урампала салтак ађисем иртсе кайаççĕ. Йакур та пур унта. Хуткупăс калать. Аван çын çав Йакур. Йаш пӳ-силлĕскер, мĕнле илемлĕ утса пырать вăл. Мана вăл йуратать... Йуратать те, анђах пит ђухăн. (*Хут купăс сасси илтĕнми пулать*). Кеорки çукçке унта. Вăт çав Кеорки пуйан. Кеоркине кађђа пыракана аван пулать. Кеорки мана кађђа илес пулсан, нимĕн те

кирлĕмарђђĕ... Вăл та мана йурататăп тет те, анђах... суйа сăмах кăна пулмĕ-ши?! (*Кантăкне хупса каллех. ђăлха çыхма тытăнат те, йурласа йарат*).

Лаша кӳлсе тăратнă,
Вăрăм çула каймашкăн. (2 хут).
Анне мана çуратнă—
Çитмен пурнăç курмашкăн... (2 хут).

(*Алăк умĕнђе урă сасси илтĕнет те, Кеорки алăка уçса пăхат*).

Кеорки. Есĕ пĕђђенех-и, Праççи?

Праççи. Пĕђђенех-çке (*турине аванпарах çыхат, кĕпине тӳрлеткелесе йусанат*).

Кеорки (*кĕрсе Праççипе йунашар ларса ларат*). Салтак ађисенђен вăрттăн анкарти хыçĕпе сан пата ђупса килтĕм... Ух! Есĕ çаплах ђăлха çыхатăнçке, пăрах! (*Праççи аллинђен ђăлхана илсе кантăк умне хурат*). Епĕ кăшт кăна ларатăп, вара каллех çых.

Праççи. Есĕ мĕншĕн салтак ађисемпе пĕрле йурласа çӳреместĕн? Санăн салтак йађĕ Йакурсемпе пĕрле тухман-и мĕн?

Кеорки. Тухнă та, епĕ салтака каймастăп вĕт.

Праççи. Мĕншĕн? Хĕрлĕ çара пурне те илсе кайаççĕ çке.

Кеорки. Мана атте салтака парасшăн мар. Есĕ Хĕрлĕ Çара кайнине курам мар, тет. Салтакран мана ђирлеттерсе хăварас тет. Вара... вара епĕ авланас тетĕп. (*Праççине куçран пăхса*). Сана илес тетĕп...

Праççи (*хăйусăрланса, куçĕсемпе çĕрелле пăхса*). Хăвăнне ху пĕлетĕн.

Кеорки (*Прaççине ыталаса*). Ех, ђун. Праççи! Сана кађђа илмесен, епĕ çак тĕнђере те пурăнам мар!

Праççи (*Кеорки аллине хăй çинђен хуллен сирсе*). Анне килсе кĕрĕ. Çын курсан аван мар пек...

Кеорки. Йакур та сан çине пит ăшă куçпа пăхат̆...

Праççи. Пăхат̆ пулĕ те, сана... сана кам йуратмĕ.

Кеорки. Çапла еппин... Салтакран йулсанах епĕ сана кађђа илетĕп (*ура çине тăрса*). Ĕнтĕ кайам-ха (*кулса, йăвашшăн пӳрнипе йунат̆*). Асту, хура куç, çырла пит̆! Урăх çын йеннелле ан пăх! (*тухса кайат̆*).

Праççи (*савăнăçлă*). Кеорки шухăш çинех килсе кĕђĕ. (*Çурăмне кантăк патнелле туса сĕтел хушшине ђăлха çыхма кĕрсе ларат̆*). Ех, Кеоркине кађђа кайсан, аннепе шăлăм та тутă пулĕђђĕç! (*хавасланса уççăн йурласа йарат̆*).

Хĕртсе хĕвел пăхсассăн,
Кули ђеђек саралмаст̆. (2 хут).
Савни ăшшăн пăхсассăн,
Кули ђунăм савăнмаст̆... (2 хут).

(*Праççи йурлана вăхăтра кантăка Иљакка хуллен уçат̆. Љапсăркка калпаклă пуçне кантăкран ђиксе пӳртелле пăхат̆ те, аллине ђăсса Праççине ђĕпĕтсе илет*).

Праççи (*шарт сиксе*). Кам çăва вăл? (*кантăк патĕнђен сиксе ларат̆*).

Иљакка (*кулкаласа*). Çăва мар епĕ, çын. Мĕн шăнкăрђă ђĕппи пек пӳртре пĕђђенех йурласа ларатăн?!

Праççи (*сиввĕн*). Сана мĕн ĕç?

Илђакка. Манăн ĕçех çук та, урамалла тух, тетĕп (*Праççине татах тђĕпĕтесшĕн аллине тђăсать*).

Праççи (*тĕлĕнсе кайса*). Кай, Илђакка пиђђе! Ватă пуçупа мĕн çынна ђĕпĕтсе çўретĕн?

Илђакка (*шăлне йĕрсе*). Х-ха! Ватă çынăн ђун çук-и? Ватă çынăн та ырă хыпар илтсен ђун тапатĭ, хĕрпе вылђас килет.

Праççи (*айăкалла пăхса*). Ку пуťсĕр, епĕ Кеоркипе сăмахланине сисрĕ пулĕçке. (*Илђаккана*) Мĕн ырă хыпар апла?

Илђакка. Шуррисем Хусана тепĕр хут туртса илеççĕ тет. Çавна илтсен савăнтăм. Хĕрпе вылђас килсе кайрĕ. Кунтарах сик-ха, Праççи!

Праççи (*кăмăлсăрланса*). Ан калаç, Илђакка пиђђе! Ху ватăлнă...

Илђакка (*Праççи сăмахне тытса илсе*). Ху ватăлнă, çапах çамрăк хĕрсене йуратасшăн, тесе каласшăн вĕт ĕсĕ. Илђакка муђи çамрăккисене çеç йуратать çав! Есĕ пĕђђенех-и?

Праççи (*кантăка хупма тытăнса*). Кирлĕ маррине ан супĕлтет, Илђакка пиђђе!

Илђакка (*кантăка вăйпа уçса*). Х-ха мĕнле мăн кăмăлла! Кайатăп еппин... (*кантăк патĕнтђен çухалать*).

Праççи. Аранах кайрĕ (*кантăкне хупать*). Хамăр пата кĕресрен ђунăм йулмарĕ, (*тђарăнса тăрса*). Ăçталла кайрĕши-ха (*кантăка уçса пăхать*). Ăçталла кайнă вăл? Ниçта та курăнмасť.

(*Прассди кантăкран пăхнă хушăра Иҍакка пӳрте васкаса кĕрет. Сисĕнкĕсĕр, тҍĕрне вĕççĕн утса, пырса Праççине хыçалтан йарса илет*).

Праççи (*хăраса, çиленсе ура çине тăрат*). Мĕн хăтланса çӳретĕн, ватă супнă! Тху! (*сурат*). Ан çыпăç! (*Çăлкаланса Иҍаккана тĕксе йарса урай варрине тухса тăрат*).

Иҍакка (*пăшăлтатса, куçĕсене хĕскелесе*). Ан шарла, Праççи! (*Праççи патнелле йăпшăнса утса пырат*).

Праççи (*Иҍаккаран пăрăнса çӳресе*). Намăса пĕлместĕн, Иҍакка пиҍҍе, тухса кай!

Иҍакка (*йăвашшăн, шăлăнса*). Праççи хĕрĕм... Кăçал çăвĕпе санпала ăмсанса пурăнтăм. (*Праççине ыталаса илесшĕн, Праççи тарат*).

Праççи. Ан тыткала! Тухса кай!

Иҍакка. Ан шарла-ха! Хам патăнта ĕçленĕ ҍух çăвĕпе санпа пĕҍҍен пулас тесе май шырарăм... Май пулмарĕ... Халĕ тӳсеймерĕм, килтĕм (*ыталама хăтланат*).

Праççи (*ура тапса, пĕтĕм тҍун хавалĕпе çухăрса*). Тухса кай! Тухса кай! (*кантăк патне тҍупса пырса*). Ай-йай! Кам та пулин килĕрха кунта! Ай! Кра-вул!..

Иҍакка (*Праççи çăварне хуплама пикĕнсе*). Ан çухăр! Манпала пĕрех аван пулсан, епĕ сана пурçăн тутăр, пушмак-ҍăлха, кĕпелĕхсем... Мĕн ыйтнă, çавна парап. (*Праççине вăйпа тытат*).

Праççи (*ура тапса*). Нимĕн те кирлĕ мар! Тухса кай!

Иҍакка (*алăк патнелле кайса*). Е-е-е! мана—тухса

кай, тетӗн, тиркетӗн... Ман ывӑла Кеоркине, кӑмӑл ҭӑватӑн! Намӑссӑр! Кеорки ҫулланса тухса кайнине куртӑм вӗт епӗ. Йасар!... Йӗпӗлти!...

П р а ҫ ҫ и (*питне хупласа*). Ах! Мӗн калаҫан!

М а р и к и н к е (*сӑкман аркине ҫӑкӑр ҭӗркесе кӗрет*). Мӗн ҫухӑратӑн, есӗ Праҫҫи! Ес ҫухӑрашни таҫтах илтӗнет.

П р а ҫ ҫ и (*амӑш патне ыраса тӑрса*). Ах, анне! Анне! Ырах килтӗн есӗ! Илҕакка пиҕҕе мана... пит хӑратрӗ!

М а р и к и н к е (*Илҕаккана сиввӗн пӑхса*). Илҕакка пйахам! Есӗ пирӗн пата мӗншӗн килтӗн тата? Хӑйӑр хутӑштарнӑ кӗрпе-ҫӑнӑха ҕухӑнсем мӗнле ҫинине курма килтӗн-и? (*сӑкман арки ӑшӗнҭен сӗтел ҫине ҫур ҫӑкӑр кӑларса хурат, сӑкманне ҫакат*).

И л ҕ а к к а (*хӑйуллӑ пулса, уткаласа ҫӳресе*). Сире ҫӑнӑхӗ те, кӗрпийӗ те наҕарри пулҕӗ ҫав. Аваннине, тасине парас мари, тесе килтӗм епӗ (*ҭарӑнса тӑрса*). Анҕах... анҕах Праҫҫи манпала пит усал... Манпала пӗрех аван пулсан—сире кӗрпе-ҫӑна́х мӗн ҕухлӗ кирлӗ, ҫавӑн ҕухлė парӑттӑм.

М а р и к и н к е (*тӑнланмасӑр*). Тасине парсан тем пекех аванҕӗ те... (*сак ҫине ларат, Праҫҫи амӑшӗпе пӗрле тӑрат*).

П р а ҫ ҫ и (*амӑшне кӗпе ҫаннинҭен туртса*). Анне! Мӗн калаҫатӑн?

М а р и к и н к е. Мӗн апла?

П р а ҫ ҫ и. Ах, анне, пӗлместӗнҫке есӗ... Илҕакка пиҕҕе мана... (*йулашки сӑмахне амӑш хӑлхинҭен калат*).

Марик инке (*хăраса тĕлĕнсе кайса*). Ах, тур, тур, ађам! Çаванпа çухăртăни есĕ?

Илђакка (*хăйуллă*). Пĕрре йуратам терĕм Праççине (*тђарăнса тăрса*). Выçă ларатăр вĕт халĕ есĕр!

Марик инке (*хурланса ўпкелесе*). Ей, Илђакка пйахам! Çак хĕрађа патне аскăн шухăшпа килме намăсланманçке? Ай-йай тур!

Илђакка. Х-хе, уншăн мĕн намăсланмалли пур! Арçынна мĕн намăсĕ пултăр? Хĕрарăма вĕт, намăс... Мана намăс пулас çук.

Праççи (*çилĕпе*). Ах шуйттан! Тухса кай! (*ура тапат*).

Марик инке. Ех, Илђакка пйахам! Пире путарсах, пылђăк айне çăрăнтарсах кўртсе хурасшăнçке есĕ. Пире çука йертни çитмен сана, ман хĕре мăшкăлама килнĕ!

Илђакка (*аллине сĕлтсе*). Е-е-е! пуçларĕ ĕнтĕ кирлĕ маррине сĕтĕрме... Ман ала виттĕр Праççи пек хĕрсем мар, пуртарах çын хĕрĕсем те темĕн ђул тухнă. Луђђă таврашлă пулаççĕ... Хамăн карђăк вилнĕренпе... пайтах...

Праççи. Ех, ăнăççăр! Мана та çавăн пек терĕним?

Марик инке (*Илђакка патне пырса*). Тухса кай, пйахам! Ху турă саккунĕпе пурăнатăп, тетĕн. Ђиркў старăстинђе çўретĕн, пире—тăлăх-турата мăшкăлама çылăха та пĕлместĕн!

Илђакка. Турри вăл кĕлтусан, çурта лартсан, çылăха каçарат (*тђарăнса тăрса*). Ухмах есĕ... Санăн,

епӗ кунта килнӗшӗн, савӑнмалла: манӑн Прaççине пуйан çын ӑшшӑн пӑхатӑ-ха, темелле. Выçӑ ларattӑр! Çара-пакартӑн пек çӳретӗр! Хӑвӑр çапах... ытла та мӑн кӑмӑллӑ! Хӑвӑра ырра хуратӑр!

Праççи (*Илҕаккана*). Тухса кай! (*амӑшне*) Ан калаç, анне унпала. Аттӑ кӳрше тухса кайар (*амӑшне алӑк патнелле çавӑтать, Илҕакка вӗсене пӳлет*).

Илҕакка. Ан кайӑр-ха, тен килӗшӗпӗр.

Марик инке (*сак çине кайса ларать, Праççи унпала йунашар тӑрать*). Ей-йей-йей, Илҕакка пйахам! Есӗ мӑшкӑланине ӗмӗр манас çук... Ӗçленӗшӗн кӗрпене те, çӑнӑха та хӑйӑр хутӑштарса патӑн... Ҕухӑн çын та çынах, Илҕакка пйахам... Никамӑн та çӑкӑр вырӑнне тӑпра çийес килмест...

Илҕакка. Ан çийӗр! Сире кам тӑпра çиме хушатӑ. Таса кӗрпе-çӑнӑх паратӑп, тетӗп вӗт... Праççи...

Праççи. Ан калаç, анне унпала! Мӑшкӑлатӑ вӑл! (*Илҕаккана*) Тухса кай, тенӗ сана паçӑрах!

Марик инке. Мӑшкӑла пйахам! Праççине выçӑ вилес пулсан та, санӑн куллу тӑвас çук!.. Ман старик сан патӑнта 17 çул тарçӑра пурӑнҕӗ (*куçне шӑлса илсе*). Кунӗн-çӗрӗн тенӗ пек ӗçлесе те мунҕа пек пӗҕӗк кивӗ пӳртрех вилҕӗ, шеремет!

Илҕакка (*уткаласа çӳресех*). Кам вилмест. Турри çавӑн пек, çын патӗнҕе ӗçлесе, пурӑнса вилмелле çырнӑ.

Марик инке (*вӑрӑмӑн сывласа*). Ман старик сан, патӑнта ӗçлесех ҕирлерӗ вӑл... Сывалас тесе сантан 5 тенкӗ укçа илҕӗ. Есӗ çав укçашӑн пирӗн пахҕана

ана-çарана икĕ çулђђен тара илтĕн те, епĕр пушшех çука йерсе кайрăмăр. Халĕ те çаплах сана çĕрулмилле, çăнăхла каљђине те, пахђине те памасăр пурăнаймастпăр... Пĕтертĕн есĕ пире, пïахам, пĕтертĕн... (*йĕрсе илет*).

П р а ç ç и. Епĕр тарăхса ĕçленĕшĕн хăйăрлă çăнăх паратĭ тата.

И љ а к к а (*витлесе*), Хăйăрлă-мĕнлĕ апла-та капла! Кĕсре хÿри мари сире! Панă йапалана тиркетĕр. Хаљхи саманара сире такам таса кĕрпе-çăнăх парса лартăр. Сире мар, комиттет петнотты ман армантан илнĕ çăнăха та, кĕрпене те епĕ çурри хăйăр хутăштарса патăм (*шăлне йĕрсе*). Илђђĕр, çиђђĕр ђухăнсем, шел мар! Наркăмăш йарса памалађђĕ те, наркăмăшĕ хаклă. Ђухăнсем çынăнне хапсăнаççĕ! Сăхă йатта вĕри пашалу, тенĕ!

М а р и к и н к е. Çын марçке есĕ, пïахам! Тухса кай!

И љ а к к а. Кайăп-ха (*Праççи патне çăмăллăн сиксе пырса ăна тђĕпĕтсе илет*). Марик кин! Ку тавара ăçта вырăнаçтарас тетĕн! Тăварласа хурас тетĕни мĕн?

П р а ç ç и (*амăшне ыталаса*). Анне-е-е!

М а р и к и н к е (*хайарланса*). Тухса кай! Тухса кай, йăтă пиђĕ! Намăссăр! (*Кăмака умĕнтђен çатма аври илсе*). Акă йасар куçусене тĕртсе шăтарăп!

П р а ç ç и. Анне! Кăларса йар хăвăртрах! Çап ăна!

М а р и к и н к е. Тухса кай! Тухса кай! (*Иљакка патне çатма аврипе хăмсарса пыратĭ*).

И љ а к к а (*шăлне йĕрсе*). Х-ха! хĕрне такам ваљђи

усраť. (*Марик инке çатма аврипе хăмсарнине хирĕç тытаť*).

Марик инке (*хăмсарса*). Тухса кай, тенĕ, кай!

Илђакка (*Праççине çав хушăрах ђĕпĕтсе илме хăтланса*). Тен есĕ, Праççи, ман ывăлсене кађђа пырасшăн пуљ... Илеççĕ вĕсем сана! Кĕтсех тăр!

Праççи (*йĕрсе йарас пек сасăпа*). Ђар, анне ђар! Çынсем илтсен тем калĕç!

Марик инке (*Илђаккана çурăмран çатма аврипе çапса*). Кай! Кай!

Илђакка (*Марик инкене хирĕç тытса*). Сан хĕрне ман ывăлсем илес çук. Кронит—ухвитсер. Праççи çине çавăрăнса та пăхас çук!

Праççи (*питне хупласа*). Ан калаçтар, анне-е-е! Ђун тарăхаť!

Марик инке (*çатма аврипе урайне таклаттарса*). Тух! тух! тухса кай!

Илђакка (*Праççине*). Кеорки те сана илес çук. Ахаљ кăна илĕртет. Ху çавăн йышши есĕ... Кĕсри кĕçенмесен ăйри пымасť, теççĕ... Йасар есĕ ху! Сан пек кĕлмĕçсене епĕ киле те кўртес çук! Есĕр килĕшĕпе çакă манăн сурђăка тăмастăр! Ťху! (*сураť*).

Праççи. Ах анне-е! Анне! (*питне хупласа йĕрсе йарса сĕтел çине тайăлаť*).

Марик инке (*хурланса, йĕрсе йарас пек пулса*). Ах, пйахам, пйахам!.. Кирлĕ маррине ан калаççам! Сан ывăлусем çинђен шутламастпăр епĕр. (*Урамра хут купăс сасси илтĕнет*).

Иљакка (*хăранă пек пулса*). Такам килет. (*Алăк патнерех сак çине кайса ларат*).

Марикинке (*Кантăкран пăхса*). Йакур килетха. (*Çатма аврине кăмака умне кайса тăратат. Праççи питне-куçне тутăр вĕçĕпе шăлса йĕме ђарăнат*).

Йакур (*хут купăсне каласа йурласа кĕрет*).

> Епĕр кайас çул çинђе
> Ик айккипе сар ђеђек (2 хут).
> Епĕр çитес çĕрсенђе
> Ик айккипе вут та хĕм... (2 хут).

Марикинке (*Йакура йшшăн*). Килех, Йакур!

Йакур. Килтĕм-ха. (*Праççипе йунашар пырса ларат, хут купăсне сĕтел çине хурат*). Мĕн йанрашатăр есĕр пайан (*Праççине куçран пăхса*). Праççи есĕ мĕн, йĕнĕ пек?

Праççи (*хурлăхлă*). Ђухăн çын хĕрĕн йĕмелли те пулаť. Иљакка пиђђе мана... (*ђарăнаймасăр каллах ĕсĕклесе йĕрсе йарат те, тухса кайат*).

Йакур. Х-ха! Мĕн пулнă! Иљакка пиђђе есĕ макăртрăни Праççине? (*хайаррăн ђышкипе йунаса*). Асту сана! Куна куратăни?! Халĕ ĕнтĕ ĕлĕкхи мар! Пире уретникпе хăратаймăн! (*уткалат*).

Иљакка (*хăйуллăн*). Епĕ мар, туршăн та епĕ мар! Шуррисем-мĕнсем килеççĕ терĕмĕр те, çавăнпа йĕрет пуљ.

Марикинке (*Иљаккана çилĕпе пăхса*). Суйаť... калама та намăс... (*Йакура*). Ах, Йакур, ырах килсе кĕтĕн есĕ, ађам. Паçук кинсенђен сăра кайса илсе ĕçтеремха сана (*тухса кайат*).

Йакур. Есĕ мĕн шуррисене пит асăнатăн? Есĕ вĕсене пит кĕтетĕн пулас та, епĕр вĕсене хăваласа йама кайас тетпĕр (*уткалат*).

Иљакка (*хăйуллăн*). Хăваласа йарас тенипех хăваласа йараймăр. Совет ĕмĕрех пырас çук, пĕтет (*сак çинтђен сиксе тăрса хавасăн*). Шуррисем килсен... ех!

Йакур. Мĕн вара шуррисем килсен?

Иљакка. Комиттет петнотты таврашне çапла çеç сӳрсе йаратпăр! (*ывăç тупăнĕ çинтђен çӳпĕ вĕçтерсе йанă пек вĕрсе кăтартат*). Шуррисем килсен, ман пурлăха тапăнакансене пăркăђлатпăр вара!

Йакур (*çилĕпе Иљакка умне сиксе пырса, ăна туласа пăрахас пек хайаррăн*). Çă-хан! Мĕн кăраклатан! Сана куншăн касса, ђиксе пăрахмалла та!.. Аťа, малашне хăвăнне ху курăн (*Иљакка патĕнтђен пăрăнса уткалат*).

Иљакка (*кутăн тђакса*). Совет влаçĕ пурĕ пĕр пĕтет. Икĕ алла йăтта касса парам—пĕтет!

Йакур. Есĕ Совет влаçĕ пĕтет тесе Кронита шуррисем патне ăсатрăни, Ђăмаппи çармăспа?

Иљакка. Ăсатрăм çав. Кеоркине те хĕрлĕ çара йамăп... Ман ывăлсем хĕрлĕ çарта çӳреме ухмах мар...

Йакур (*Иљаккана хайаррăн кăкăртан йарса илсе силлет*). Ы-ых! Совет влаçĕ пĕтети? Хĕрлĕ çара кайакансем ухмах-и? (*тĕксе йарса*). Револютси аллийĕ йарса илĕха сана! Ех, ăнăçсăр! (*уткаласа çӳрет*).

Иљакка (*йăвашшăн*). Епĕ çапăçмалла мар, ахаљ кăна калатăп... Пăркун кантура хуларан комиссар пекки килнĕ. Çав калаť: Совет влаçĕ тĕреклĕленет, Октăпĕр çĕнтерет, ĕçхалăхне илемлĕ пурăнăç туса парĕ тет... (*кулса*). Тепĕр кунах шуррисем Хусана пырса кĕнĕ. Кăшт пурăнсан Тĕрлемес стантсине те шуррисем çунтарса йађĕç... Çĕмĕреççĕ шуррисем, çĕнтереççĕ Совета, пирĕн кунта çапах: Октăпĕр çĕнтерет, тесе çўреççĕ. Ťху! [*сурать*]. Йăтă пăх патĕнђе Октăпĕр çĕнтерети?

Йакур. Ан палка! [*кăкрине тъыша*]. Ан кўрентер ман ђĕрене! [*Иљъкка кутăн тъякса сак çине ларать*].

Марик инке (*тъĕресне сăра илсе кĕрет сĕтел çине лартать*). Иљакка пйахам халĕ те кайманçке. Сăра илсе килтĕм, Йакур, ĕç-ха (*сăрине тултарса мъłтан хăй ĕçет, вара Йакура тултарса парать, Йакур сĕтел хушшине ларать*).

Йакур (*сăрине ĕçсе*). Тавта-пуç инке! Иљаккапа йатлаçса ăш хыпнăђђĕ-ха. Шуррисемпе хăратаť.

Иљакка. Хăратса мар. Шуррисем килеççех ĕнтĕ, Совета пĕтеретпĕр.

Йакур [*сĕтелĕ тъыша*]. Ан калаç! Çапса салатам!

Марик инке (*сĕтел хушшине кĕрсе ларса Йакур вăђђи тата сăра тултарса*). Иљакка пйахам, есĕ шуррисене кĕтсе хăвăн арманти кĕрпе-çăнăха хăйăр хутăштарнă пулĕçке.

Йакур (*сăрана ĕçсе*). Намăса та пĕлмерĕни ђухăнсене валеçмелле кĕрпе-çăнăха пăсма?

Иђакка [*хăйуллăн*]. Х-хе, уншăн намăс пулаҭи? Хăйăрне хутăштартăм... тутлăрах пултăр тесе... Тутлă мартăк, ан илђђёр (*аллине сĕлтсе*). Е-е-е, ђухăнсене пар тођккă! Вĕсем хăйăрлă кĕрпе-çăнăха мар, ђула та çисе йарĕç.

Марик инке (*пуçне суллаcа, Иђаккана*). Ех, çы-ын!

Йакур. Çын та мар, йăтă та мар, сысна та мар! Ирсĕр йапала! (*сасартăк сĕтел хушшинђен сиксе тăрса хайаррăн*). Тухса кай кунтан! Ан кӳрентер пире! (*Иђаккана пырса алăк патнелле тĕкет*). Кай! кайах! Ђухăнсене мăшкăланăшăн сана асăнтарăп-ха!

Иђакка (*тухса кайасшăн мар тапăлтатса*). Асăнтарăпах шуррисем килсен!

Йакур (*Иђаккана тĕксе*). Тухса кай! тухса кай! Ех, сана! Сан мăшкăла нумай тӳснĕ епĕ! Мĕн пĕђĕкренпех сан патăнта ĕçлесе тарăхнă епĕ.

Иђакка (*витлесе*). Тарçă вĕт есĕ! Манăн тарçă! Ахађ каламан, йăтти мăнтăрлансан, хуçине тапăнаҭ, тесе! Ман çăкăра çисе ӳсрĕн те, халĕ мана хирĕç пыратăн!...

Марик инке. Ех, Иђакка пйахам! Пурне те мăшкăлатăнçке есĕ. Прăççи халĕ те йĕретши? (*тухса кайаҭ*).

Йакур (*Иђакка патĕнђен кайса, уткаласа çӳресе*). Мăшкăла! Малашне мăшкăлаттарăпăр епĕр сана! Ђухăнсен йунне ĕçсе пуйрăн та, ђухăнсемех сана çука хăварĕç! Кĕçĕрех епĕр пухăнса хулана отрет илме çын йарăпăр! (*Иђакка умне тăрса*). Сана! Санаи? Асăнтарăпăрха сана!

Иљакка (*тепĕр хут сак çине ларса*). Асăнтар кĕсре хўрине! Комиттет петнотты икĕ çĕр пăт вир кĕрпи, пин çур пăт ыраш çăнăх армантан илсе кайнă, çитет сире! Урăх епĕ сире нимĕн те парас çук.

Йакур (*хĕрўллĕн*). Паратăн! Мĕн пур пурлăхна пĕтĕмпе паратăн! Сана тĕп тумасăр салтака тухса каймастăп!

Иљакка (*тъĕрре кĕрсе, сак çинтъен сиксе тăрса*). Шуррисем килсен сан хўрене хĕстерĕп вара!

Йакур (*хайаррăн*). Вон! Тухса кай! (*Иљаккана алăк патнелле тĕкет*).

Иљакка (*алăка уçса*). Мĕн çынна тĕксе тăратăн? (*витленĕ сасăпа*). Револютси алли... Кĕсре хўри алли!... Нимĕн те тăваймастăр есĕр мана! (*алăкран тухать*). Иљакка пуйан пулнă, Иљакках пуйан пулĕ! [*алăк хушшинтъен пăхса*]. Тапăлтатăрха! Шуррисем килсен акă çапла ђăмăртап сире! [*алăк хушшинтъен тъышкă тъăмăрне кăтартать*].

Йакур (*çилĕпе алăка урапа тапса хупать*). Ы-ых! Ирсĕр йапала! Тухса кайа пĕлмест! (*алăк патĕнтъен кайса, уткаласа çўрресе, хĕрўллĕн*). Нумай мăшкăланă, нумай тарăхтарнă ђухăнсене Иљакка! Вăл тарăхтарса, мăшкăласа пурăннă çынсене пухăп! Пĕтерĕпĕр Иљаккана!

Марикинке (*кĕрсе*). Аранах кайрĕ пулас путсĕр етем—Иљакка! (*Сĕтел патне пырса сăра тултарса Йакура парать*). Ĕç-ха, Йакур.

Йакур (*ĕçсе*). Мĕншĕн килсе çапăннă вара кунта Иљакка?

Марик инке. Йури пире хурлантарма, мăшкăлама пуљ. Праççине темĕн те каласа пĕтерђĕ. Ађа халĕ те çаплах ђарăнаймасăрах кĕлетре йĕређђĕха. Тухса ђĕнес пуљ. [*Алăка уçат те çухрат*]. Праççи! Праççи! Иљакка кайрĕ, пӳрте кĕр!

Йакур. Мĕн каланă вăл Праççине, мĕншĕн, йĕртнĕ?

Марик инке. Иљакка кама çын вырăнне хуни пур? Иљакка аскăн шухăшсăр çӳресе те курман пуљ. Аскăнланма килнĕ кунта. Ах, вăй пĕтсех кайрĕ ĕнтĕ (*сак çине ларат*).

Йакур (*тулашса*). Ех! мĕншĕн маларах каламарăн! Епĕ ăна, касса, ђиксе пăрахаттăм, шăлпа çыртса çураттăм. (*Кантăкран пăхса*). Ы-ых! Айакка кайнăши? Хуса çитсе вĕлерĕттĕм! (*Праççи хуйхăллă кĕрет, Йакур Праççине курса, ун пчтне пырса хĕрӳллĕн*). Праççи! Праççи! Иљакка сана мĕн турĕ?

Праççи (*йĕрсе йарса, тутăр вĕçĕсемпе куçĕсене шăлса*). Нимĕн те туман! Сăмахпа хăртрĕ, ђĕлхепе касрĕ ман ђĕрене (*хăй вырăнне кантăк патне иртсе ларат*).

Марик инке. Ыр хам килсе кĕтĕм. Праççи ун ђухне çухăрса тăрат.

Йакур (*лăпланса*). Ан йĕр, Праççи! Иљакка пайан çынсене йулашки хут мăшкăласа, йулашки хут ђунне кантарђĕ пуљ тетĕп. Малашне текех мăшкăлаймĕ!

Марик инке (*сăрине тултарса*). Пайан тĕртĕрпех. Лăпланар-ха ĕнтĕ пурте. Йакура хăна тăвар,

Прӑҫҫи. (*Сӑра тултарса хӑй те ӗҫет, Йакурпа Прасҫине те ӗҫтерет. Ҫав вӑхӑтра Лексантӑр кӗрет. Аллине хаҫат тытнӑ, хӑй савӑнӑҫлӑ*).

Лексантӑр. Ырӑ хыпар пур. [*Йакур патне пырса*]. Ме-ха, Йакур пиҫҫе, хаҫат, вуласа пӑх. Шуррисене Совет ҫарӗсем Ҫӗпӗрелле хӗсӗрлеҫҫӗ тесе ҫырнӑ.

Йакур (*хаҫата илсе*). Хӗсӗрлеҫҫӗр ҫав. Пирӗн те кайса авантарах хырасҫӗха вӗсене.

Прӑҫҫи. Иҫакка пайан шуррисене кӗтсе пит хӑпартланнӑҫҫӗха.

(*Йакурпа Прасҫи хаҫат пӑхма тытӑнаҫҫӗ*).

Марик инке [*Лексантӑра сӑра парса*]. Сӑра ӗҫетӗн-и? Ӑҫта ҫӗтсе ҫӳрерӗнха?

Лексантӑр (*аллине сӗлтсе*). Выҫӑ хырӑмпа какуй ӗҫме! [*ҫӑкӑра пӑхса*]. Ҫиме пулсан йураҫҫӗ те... анҫах ҫисех тӑрас мар пуҫ. Уҫитлӗ ывӑлӗ Виҫҫӑ хулана вӗренме кайаҫ. Епӗ те унпала хулана кайса пӑхас тетӗп-ха.

Марик инке. Кӗҫӗрех кайаттӑри вара?

Лексантӑр. Кӗҫӗрех утас тетпӗр ҫав. Вӗренме кӗрес тетӗп, анне. Шкулта аҫасене тен пайок та пулӗ, тет уҫитлӗ. Кайас пуҫ тетӗп. Ҫӑкӑр касса парха.

Марик инке. Кайас пулсан кайах. (*Ҫӑкӑр касса Лексантӑра парать. Лексантӑр ҫӑкӑрне сӑхмин кӗсйине чикет*).

Лексантӑр. Сывӑ пул, аппа! Йакур пиҫҫе! (*иккӗшне те алӑ тытать*). Кайамха [*тухать*].

Марик инке. [*Лексантӑр хыҫҫӑн пырса*]. Ӑсатса йарам, аҫам (*тухать*).

(*Йакурпа Прасси иккĕшех*).

Й а к у р (*хасата сĕтел сине хурса*). Советах сĕнтертĕр. Атту Иђакка таврашĕнђен нихăсан та хăтăлас сук (*тăрса уткаласа сӳрет*).

П р а с с и (*ђăлха сыхмă тытăнса*). Иђаккана епĕ ун пек мана мăшкăлĕ тесе шухăшламан.

Й а к у р. Ех, ку Иђакка таврашне! (*Прассине ӳпкелесе*). Есĕ ху сапах Иђакка ывăлĕпе, Кеоркипе савни шутĕнђе тăратăн... пур сĕртре те сана кађђа илетĕп тесе каласса сӳрет.

П р а с с и. Халĕ ĕнтĕ епĕ Кеоркине кађђа вĕлеретĕп тесессĕн те кайассăм сук...

Й а к у р (*савăнăслă*). Ђăнахи, Прасси? (*Прассине йунашар пырса ларат*).

П р а с с и. Ђăн пулмасăр. Иђакка манăн пĕтĕм ђуна, ђĕрене пистерђĕ. Вĕсен килне кађђа мар, ĕслеме те кайса кĕрес ан пултăр. Ђăлхи те савсен. Сыхас мар! (*пăрахат*).

Й а к у р (*Прассине кусран пăхса*). Ђăнахи Прасси?! Мана, хăвăн ĕлĕкхи тусна, аса илтĕни?

П р а с с и (*ăшшăн*). Епĕр иксĕмĕр пĕр пĕринђен сивĕнмен вĕт.

Й а к у р (*хурлăхлă, ђĕререн*). Сивĕнесси сивĕнмен те, анђах сак йулашки вăхăтра сана пуйан ывăлĕ пахараххине манăн ђĕре туйађђĕ. Етеме пуйанлăх илĕртет. Епĕ ђухăн. Йађĕ те пуйан ывăлĕн урăхла. Кеоркипе иксĕмĕре пађăшкă пĕр йатлă хунă пулин те, пирĕн йатсем пĕр пек мар. Пуйан ывăлĕ— Кеорки, епĕ—Йакур, Йакуркка... тессĕ мана.

П р а ç ç и (*ăшшăн*). Ан ўпкеле, Йакур.

Й а к у р. Ўпкелесе мар, ђĕрери шухăша калас терĕм.

П р а ç ç и. Ђухăн çын çынна мăшкăламасť, таптамасť. Ђухăн çынăн пуйанпа çыхланма кирлĕ маррине епĕ пайан ђухларăм ĕнтĕ.

Й а к у р (*савăнăçлă*). Ђухларăн еппин! (*пуçне Праççи пуçĕпе пĕрле туса, куçран пăхса*). Ех, Праççи! Салтакран килсен мăшăрланăпăри?

П р а ç ç и (*уççăн*). Мăшăрланăпăр.

Й а к у р. Иксĕмĕр те ђухăн пулсан та, ĕçлĕпĕр, пурăнăпăр... тата совет влаçĕ ђухăнсене хăйала *) хумасť. Епĕр те çын пулăпăр... Хамăр ăраскала тупăпăр!

*Ђаршав.*

*) Пăрахăça

## II-мĕш пайĕ.

*Тепĕр икĕ кунтан, çĕрле, ир йенне. Стенă— Иђаккапа Кеорки выртса-тăрса пурăнакан пÿлĕм. Урам йенелле тухакан кантăка шур катам пирпе карнă. Сĕтел çинтђе пĕтђĕк лампă çунса ларатъ. Тур кĕтессинтђе пысăк турăшсем курăнаççĕ. Пÿлĕмре икĕ йентђе икĕ алăк: пĕри—тултан кĕмелли, тепри—ытти пÿлĕмсене кĕрсе каймалли. Иђаккапа Кеорки çывăраççĕ. Иђакка кăмака çумĕнтђи вырăн çинтђе, Кеорки—кантăк патĕнтђи вырăн çинтђе. Пулĕмре тирпейлĕ, таса.*

Иђакка (*ăйăхран вăранса*). Кĕçĕр тĕлĕкре çĕрĕпе тупă сасси каймарĕ. Ђеххо-словаксем çĕмĕрсе килеççĕ пек... (*вырăн çине шурă кĕпе-йĕмпе тăрса ларатъ*). Тупă сасси ђăнахах та илтĕнместши? (*кантăк патне пырса, карнине уçса итлесе тăратъ*). Çук, илтĕнмест. Тул çутăлма тытăнатъ... Шуррисем Сĕве улăхĕнђех теççĕ те, хăçан кунта çитĕçши? Ђасрах килсен аванђђĕ. Вĕсене кĕтсе çĕрĕçĕрĕпе çывăраймастăп. (*кантăк патĕнтђен вырăнĕ çине кайса ларатъ*). Шуррисем килсен çав—Йакурпа унăн шайккине хамах пăва-пăва вĕлерĕттĕм! (*тђышкине тђăмăртаса, йунаса*). Ы-ых, вĕсене! Ђĕрĕллех çĕре ђавса ђиктерĕттĕм!

Кеорки (*вӑранса*). Мĕн йантрашатӑн есĕ, атте! (*ҫавӑрӑнса выртӑт те, ҫывӑрса кайӑт*).

Иљакка. Ŏху! (*сурӑт*). Каллах ҫывӑрса кайрĕ, путсӑр! Иртерех тӑрса ҫав ĕнер пытарса пĕтерейм̆ен тулла пытарса пĕтерес теттĕм (*тумланма тытӑнат*). Шуррисем килсе тухиђђен тулӑ ҫĕр айĕнђе те выртĕ теттĕм. Шуррисем килсе ĕлкереймесен, ҫĕр айĕнђех ҫĕртĕр вара, тулӑ! Ђухӑнсем ҫинине курас марђђĕ (*тумланса пĕтерсе*). Тӑратам-ха каллах. (*Кеорки патне пырса, хулпуҫиййĕнтђен ҫиллесе*). Кеорки, тӑр-ха, тӑр! Тул ҫутӑлиђђен тулла пытарса пĕтер!

Кеорки (*ыйхине сӳреймесĕр*). Ӑм-м-м, мĕн, мĕн тумалла? (*карӑнкалӑт*).

Иљакка. Тӑр, тӑр! Тулла шӑтӑка йатса пӑрах, тетĕп.

Кеорки( *тӑрса ларса тумланма тытӑнат*). Ҫывӑрма памарӑн есĕ кĕҫĕр (*анаслат*). Вӑл тулӑпа ĕнер ҫур ҫĕрђђен аппалантӑмӑр, пайан каллех (*хӑвӑрт тумланса тухса кайат*).

Иљакка. Наҫтаҫа ђĕн! (*тепĕр пӳлĕмĕн алӑкне уҫса*). Наҫтаҫ! Наҫтаҫ! Тӑр-ха, тӑр!

Наҫтаҫ сасси. Мĕ-ĕн! Халех тӑратӑп!

Иљакка. Тӑр хӑвӑртрах! Мĕн ҫĕрĕ ҫĕрĕпе нӳђетĕн*) Кеоркипе пĕрле тулӑ йатма тух!

Наҫтаҫ (*пӳлĕмрен тутрине ҫыхкаласа тухат*). Йӑтта хӑваланӑ пек кунĕн-ҫĕрĕн ĕҫе хӑвалатӑн.

*) Ӑйхӑпа мӑнтӑрланатӑн.

Кăçал йапала пытарни—ах тур! Шутне йĕрне те тупас çук!

Иљакка. Нумай ан палкаса тăр! Тух хăвăртрах! Асту, Наçтаç! Епĕр йапаласене пытарнине есĕ кама та пулин пĕлтерсен—сана кутăн çакатăп! (*тьыш-кине йунаса Наçтаç патнелле пырат*).

Наçтаç (*кутăн тљакса, Иљакка ăна çапасран ал-лисене кăнтарса*). Ан хĕне, Иљакка пиђђе! Вунçиђĕ çултанпа сирĕн патăрта пурăнатăп та, есĕ мана çаплах шанмастăни? (*тухса кайат*).

Иљакка. Ăçта шанатăн сире! Тарçа шанакан хăрах куççăр пулнă тет. (*Кăмака хыçне пит çума кĕрет*). Пĕђђен ђух ђасрах пит-куçа çуса турра кĕлтуса ăша кантарам-ха. (*Пит çуса шăлăнса турăш умне пырса тăрат*). Ăçташи-ха манăн леш манах çырса хăварнă кĕлĕ. (*Турăшсем хыçне аллине йарса хут татăкĕ илсе сăх-сăхса вулама тытăнат*). Турă, турă, есĕ исраил халăхне тинĕс тĕпне типĕтсе, тинĕс урлă каçарнă пек, пире çак усал самана пăлхавĕнђен хăтар. Фараон çарне тинĕс тĕпне тунă пек комуниссене, комиттет петнотты таврашсене пĕтер. Çĕр питĕнђен çухалђђăр вĕсем. Йăхĕ-тĕпĕпе пĕтсе ларђђăр пољшевиксем майлисем. Ан пăрах пире турă, çăлсам, пулăшсам пире, амин. (*Ӳксе пуççапат. Кăшт шухăшласа тăрат те, сăхсăх-са каллех ӳксе пуççапса*). Кронита шуррисем патĕн ђе ђипер усра. Пытарнă пурлăха отрет мĕн килсен тупмалла ан ту. Турă, турă сана ĕненменсем, хирĕç пыракансем—совет влаçех пулат, октăпĕр вăй

илет, çĕнтерет, теççĕ. Турă! Есĕ пурне те тума пултаратăн, окťапĕре вăй илме ан пар, совета пĕтер. Есĕ совета пĕтерсен, манăн пурлăх çак пăлхавран пĕр сийенсĕр йулсан, епĕ сана мухтаса Кеорки попетоностсă сăнне ылтăнласа ђиркӳве лартатăп. (*Ӳксе пуççапат*). Акă вăл, турăшĕ те арђарах. (*Ђĕркуççи çинтђен тăрса вырăнĕ айĕнтђен артђа туртса кăларат те, артђаран сăх-сăхса турăш илет, сĕтел çине хурат*). Вăйлă çар пуçлăхĕ, Кеорки попетоностсă! Хăвăн пĕлĕт çинђи çарупа çак комуниссене пĕтер! Хĕрлĕ çарăнне çулне пӳлсе пыр, шур çарăнне уçса пыр. (*Сăх-сăхса турăша пырса тђуптăват. Кантăка урам йентђен хуллен шăкăртаттарни илтĕнет. Иђакка хăпăл-хапăл турăшне артђана тђикет те, кантăк патне пырса*). Кам вăл?

(*Урамра Пахтиар сасси*) Епĕ Пахтиар! Уç хăвăртрах!

Иђакка (*васкаса хапха уçма тухса кайат. Стсенă хыçĕнтђе Иђакка сасси*). Наçтаç! Наçтаç! пытарнă ерех йешђĕкĕнђен пĕр пулштух ерех илсе кĕрха, лешне... Кронит Капкасран илсе килнине.

Наçтаç. Йурат! халех илсе кĕрĕп! (*Иђаккапа Пахтиар кĕреççĕ. Пахтиар çурăм хыçне пештĕр çакнă*).

Иђакка. Ирт тĕпелелле. Хыв тумтирна. *Пахтиара çийелти тумтирне, пештĕрне хывма пулăшат*). Ĕнерех кĕтнĕђђĕ епĕ сана.

Пахтиар (*тĕпелелле иртсе ларса*). Ĕнерех килме май пулмарĕ. Сан шухăшлă çынсем—хĕрлĕ çара

Иђакка. Çапла пуђ, çапла пуђ, Пахтиар. Кеор-кине пĕрре пăсма мĕнђул тетĕнха?

Пахтиар (*аллине сèлтсе*). Е-е-ей, санран, пал-лакан çынран хаклă илĕпи вара?

Настаç (*ерех кĕлентђи, ђеркkесем илсе кĕрсе сĕтел çине лартса кайат*).

Иђакка. Мĕн ђулах тетĕн? Ларха, сĕтел хуш-шине (*хăй кĕрсе ларса ерехе ђеркkесем çине тул-тарат*).

Пахтиар (*сĕтел хушшине кĕрсе ларса*). Вунă тенкĕлĕх пĕр ылтăн пулсан çитет мана.

Иђакка. Хаклă пек те... (*ерехне ĕçеççĕ*).

Пахтиар. Халĕ вĕт емелĕ çук, хаклă. Манăн ĕлĕкхи.

Иђакка. Есĕ вара емелне ан шелле, Пахтиар. Пĕрмайах Кеорки салтакран йулса пымалла пултăр.

Пахтиар. Есĕ уншăн ан пăшăрхан. Кеорки ăçта-ха? Çывраťи? Ĕçе пĕтерес те, çынсем çӳреме тытăниђђен кунтан тухса вĕçес (*пештĕртен сĕтел çине емел кĕлентђисем кăларса лартат*).

Иђакка (*тула тухмалли алăка уçса*). Кеорки! кĕрха!

Пахтиар. Çын мĕн сисмĕи?

Иђакка. Никам та сисес çук (*кантăкран пăхса*). Тул çутăлђĕ. Çав аванах пулмĕ (*сĕтел çинђи ламп-пăна сӳнтерет*).

Пахтиар (*кĕлентђе çинђен емеле стаккан çине тăмлатат*). Пĕрре, иккĕ, виççĕ... (*Вунна çититтђен тумлатат*).

Кеорки (*кĕрет*). Мĕншĕн ђĕнтĕн, атте!

Иљакка. Сана епĕ салтака ан илђђĕр тесе пăсас теттĕм. Ун çинђен пĕркун иксĕмĕр калаçрăмăрçке. Епĕ Пахтиара йури çав ĕçпе ђĕнтĕм. Сана вăл емел парас, тет.

Пахтиар (*емелне стаккан çине хатĕрлесе лартса*). Акă пулђĕ.

Кеорки. Емел ĕçсех хама хам пăсасшăнах мар та, анђах...

Иљакка. Мĕн-ха, анђах, кала.

Кеорки (*хăйусăртарах*). Салтакран йулсанах Праççине кађђа илес пулсан, хама хам пăстарма та хатĕр.

Иљакка (*çийелтен*). Йурĕçке. Салтакĕнђен йуласђĕха. Ман ывăлсем хĕрлĕ çара кайса шуррисене хирĕç ан пыђђăр.

Пахтиар (*Кеоркине*). Вырт, салтăнсах вырт.

Кеорки (*салтăнса*). Пăснипеле вилсе кайсан?

Тахтиар. Пирĕн вилмест. Вилмелле тăватпăри вара? Кайран хăвах спаççипă калăн.

Иљакка. Никама та вилнине илтменçке.

Кеорки (*выртать*). Асту, Пахтиар пиђей, майĕпе.

Пахтиар (*Иљаккана*). Тыт, Иљакка пиђђе, пуçĕнђен. Малтан хăлхине йарăпăр.

Иљакка (*Кеоркине пуçĕнђен пырса тытать*). Турă пулăштăр ĕнтĕ.

Пахтиар. Ан йăшăлтат, тĕк вырт (*емеле хăрах хăлханг тăмлатать*).

Кеорки (*тапăлтатса хайаррăн çухăрса*). Ай йай! Пĕтертĕр! Çунтарат̆! (*Пахтиарпа Иђакка Кеоркине тăрса ларасран тытаççĕ*). Тӯсме çу-ук! (*тăрса ларасшăн аллисемпе хăлаçланат, çăлкаланат*).

Иђакка (*ывăлне хытăрах тытса*). Вырт, вырт ађам!

Пахтиар. Кăшт кăна вырт. Тепĕр хáлхине çеç пĕриккĕ тăмлататпăр.

Кеорки (*çăлкаланса*). Ай, кирлĕ мар, кирлĕ мар! Пит ыраттарат̆! Вилетĕп. Ай-ай-ай! Ох, ох!

Пахтиар (*тепĕр хăлхине тăмлатса*). Сараплamacт̆, хађ кăна ыратат̆ вăл. Ёнтĕ ăша пĕр пилĕк тумлам ĕçес пулат̆.

Кеорки (*çăлкаланса*). Йар, атте! Ăша ĕçместĕп! Ай, ай, ох, ох! Кунпа та вилетĕп!

Иђакка (*ывăлне хытăрах пусса выртса*). Вырт ђипер! Хĕрлĕ çара кайас килети мĕн санăн?

Пахтиар (*Иђаккана*). Çăварне уçтар!

Кеорки (*çăлкаланса*. Кайăр, кайăр ан вĕлерĕр мана!

Пахтиар. Ман пештĕрте кантра та, шĕшлĕ те пурђђĕ.

Иђакка. Кантрапа аллисене çыхаси?

Пахтиар. Çых! шĕшлĕпе çăварне хир, уç (*пештĕртен кантра, шĕшлĕ илсе парат*).

Кеорки (*çăлкаланса тархаслаcа*). Ах, атте, атте! Тархасшăн йарăр! Вĕлерсех пăрахатăр пулĕ! ох, ой!

Иђакка. Хăлхасене йанă, ăша та ĕçмелле тет

вӗт! Тӳс ӗнтӗ, салтакран йулатӑн вӗт! (*Пахтиарпа Иђакка Кеорки аллисене кантрапа ҫыхаҫҫӗ, ҫӑварне тӗшлӗпе хирсе Пахтиар емел тӑмлатать*).

Кеорки (*ҫӑварне хирнипе хӑрушшӑн*). О-о-о-о-о-ох! (*сапӑнса кайса сӑвлӑшсӑр пулса хӑрлатса выртать, ӑнсӑр пулать*).

Иђакка (*ывӑлне салтса*). Вилсе каймӗши?

Пахтиар (*хӑйӗн хатӗрӗсене пештӗре ђиксе*). Ҫук, вилмест. Епӗ нумай кун пеккине куркаланӑ. Малтан хӑрах хӑлхине емеле ирӗклӗн йартараҫҫӗ, кайран, ыраттарма пуҫласан, ҫыхса пӑрахмасӑр, ҫӑварне шӗшлӗпе хирмесӗр ӗҫ те тухмасть.

Иђакка (*шухӑша кайса*). Ђипер иртсе кайсан йурӑђђӗ.

Пахтиар (*аллине сӗлтсе*). Е-ей, иртет. Ӑйӑр та кастарнӑ ђух хытӑ тулашать те, кайран ђиперех ҫӳретҫке.

Кеорки (*ахлатса сывласа йарса*). А-а-ах! Вилеп, ӑш ҫунать! (*Икӗ аллипе хӑлхине тытса*). Ах, хӑлха! Ах пит ыратать! (*Ура ҫине сиксе тӑрать те, ҫавӑнтах пӗтӗрӗнсе ӳкет, урайӗнђе йӑваланса ҫӳресе*). Ай хӑлха! Ай ӑшђик! Вилеп!

Иђакка (*ывӑлӗ хыҫҫӑн ҫӳресе, ӑна тытма хӑтланать*). Лӑплан, Кеорки! Ыратнине тӳсес пулать! Пӗђӗк ађа мар вӗт есӗ!

Пахтиар (*Кеоркине йарса тытса*). Вырӑн ҫине ҫӗклесе выртарар-ха! Ӗнтӗ кӑшт тӑрсанах хӑйех лӑпланӗ! (*Кеоркине иккӗн ҫӗклесе вырӑн ҫине вырттараҫҫӗ*).

Кеорки (*йăвашшăнтарах*). Ой-ой-ой, ох-ох-ой! Çирĕн, атте, ман пуçа! Ăш та çунаť! Хăлхаран та темĕн йуха пуçларĕ!

Пахтиар (*айăккалла пăхса, Иљакка илтмелле мар*). Емелĕ те ытларах кайрĕ пулас.

(*Хапхана хыттăн шаккани, йăтă хайаррăн вĕрсе йани илтĕнет*).

Пахтиарпа Иљакка (*иккĕшĕ те хăраса ўксе*). Кам вăл? (*тђункалама тытăнаççĕ*).

Иљакка. Ан çухăр, текех Кеорки! Тул çутăлнă, çынсем çўреççĕ! Кам та пулин есĕ çухăрнине илтрĕ пуљ. (*Хапхана тата хытăрах тўнлеттерсе шаккани, йăтă тапăнса вĕрни илтĕнет*).

Урамри сасăсем. Уç! уç!

Наçтаç (*Пашкаса тђупса кĕрет*). Ай вар хырăм! Ђĕре! Пĕтрĕмĕр Иљакка пиђђе! Пĕтрĕмĕр! Урамра лашаллă салтаксем, халăх та пур. (*Пахтиарпа Иљакка кускалаççĕ*).

Урамри сасăсем. Уç! Уç! (*Хапхана йăвăр йапалапа персе çĕмĕрни илтĕнет, йăтă йăнăшса йарса вĕрми пулаť*).

Иљакка (*тђункаласа*). Пахтиар, тухса кай хăвăртрах! Хыçалти хапхаран тухса ђуп!

Пахтиар (*ниçта кайа пĕлмесĕр пăн-пан перĕнкелесе*). Пĕтрĕм ĕнтĕ! Тытрĕç мана (*пештĕрне, тумтирне йăтса хăвăрт тухса кайаť*).

Иљакка (*тарăхса*). Ах, тур! Хапхана çĕмĕрђĕç! Ăçта тухса тарас! Ăçта пытанас! (*Наçтаçа*) Питĕр алăка! (*унталла-кунталла тђункалаť*).

(*Наçтаç алăка питĕрет те, Кеорки кроватьĕ айне кĕрсе выртать*).

Иђакка (*Кеорки патне пырса, ăна утийалпа пуç çинтђенех витсе*). Есĕ нимĕн те ан шарла! Вырт! Ђирленĕ тетпĕр!

Урамри 1-мĕш сасă. Иђаккана çемйипе персе вĕлермелле!

2-мĕш сасă. Кĕрпе-çăнăха хăйăр хутăштарнăшăн хырăмне çурса хăйăр тултармалла!

Икĕ-виçĕ сасă (*хайаррăн*). Çĕмрĕр хытăрах! (*Тулта шăн-шан! туни, халăх кĕрлени илтĕнет*).

Иђакка (*ниçта кĕре кайа пĕлмесĕр кускаласа çÿресе турăш умне пырса тăрать, куçĕсене турăш çинелле тархасланса пăхать*). Ей турă, турă! хăтăлтар мана çак усалсенђен (*сăх-сăхса ÿксе пуççапать*). Ăçта пытанамши? (*хăйĕн кроватьĕ айне кĕрсе кайать*).

Алкумĕнђи сасăсем. Çĕмрĕр алăка! Çĕмрĕр (*Алăка йăсăр йапалапа шанлаттарасçĕ. Кĕрлени, шавлани, нумайăн тĕпĕртетсе утни илтĕнет*).

Сасăсем. Нумай мăшкăланă пире Иђакка! Вĕлерес ăна!

Отрет пуçлăхĕн сасси. Йĕркеллĕ, йулташсем, йĕркеллĕ! Ђимĕрха! (*Алăка шанлаттарса уçасçĕ те, отрет пуçлăхĕ, Йакур, тата 5 салтак кĕресçĕ. Салтаксем пăшалсемпе, отрет пуçлăхĕ портфĕлпе*).

Отрет пуçлăхĕ (*алăк патнелле пăхса*). Халăх! Йулташсем! Есĕр ан кĕрĕрха! Ухтарса тухар. (*Отретпа килнĕ çынсем кĕпĕрленсе, алăкран пăхса тăрасçĕ. Тапхăр-тапхăр шавлани, йатлаçни илтĕнет*).

Отрет пуçлăхĕ (*малалла иртсе*). Хуçи ăçта? (*Салтаксене*) Ухтарăр! (*салтаксем ухтарма тытăнаççĕ. Икĕ салтакĕ çак пӳлĕме ухтараççĕ, виççĕшĕ тепĕр алăкĕнтҗен ытти пӳлĕмсене ухтарма кĕрсе кайаççĕ.*

Йакур (*Кеорки патне пырса, питне уçса*). Акă ывăлĕ кунта, ашшĕ таçта.

Отрет пуçлăхĕ (*Кеорки патне пырса*). Есĕ, мĕн... выртатăн?

Кеорки (*вăйсăрланнă сасăпа*) Ђирленĕ епĕ (*утийалпе пуç çинтҗен пĕркенет.*)

(*Отрет пуçлăхĕпе Йакур та салтаксемпе пĕрле Иҗаккана шыраççĕ*).

1-мĕш салтак (*Иҗаккана кроват айĕнтҗе тупса*). Çăрттанĕ кунта пулас, тух! (*Иҗаккана уринтҗен сĕтĕрсе урай варрине пăрахат. Алăкран пăхса тăракансем хăраççĕ. Иҗакка тҗĕтресе ура çине тăрат*).

Халăх хушшинђи пĕр сасă. А-а-а! лекрĕ! Шăпи тулђĕ! Иђакка-а-а!

2-мĕш сасă. Нумай сăхнă пирĕн йуна, ерешмен! (*пĕри Иҗаккана патакпа çапасшăн*).

Хайар сасă. Туртса илĕр ăна кунта! Çапса, салатса пăрахăр! (*иккĕн виççĕн кĕрсе Иҗаккана алăк патнелле туртса илеççĕ те, кӳсексемпе, патаксемпе çапса илеççĕ*).

Отрет пуçлăхĕпе Йакур (*халăха тҗарса*). Ан тивĕрха, ђимĕрха (*йăнăшса çухăракан Иҗаккана халăх аллинтҗен туртса илеççĕ. Çав вăхăтра иккĕмĕш салтак Наçтаçа кравать айĕнтҗен сĕтĕрсе*

*кăларатй. Халăх каллех ахăратй. Виçĕ салтак шалти пӳлĕмсенђен тухаççĕ).*

Отрет пуçлăхĕ. Ан тивĕрха, есĕр хуçине. Епир арçыннине те, хĕрарăмне те арĕслетпĕр. (*Иљаккапа Наçтаçа пĕрле тăратаççĕ, пĕр салтак пăшалне хулпуççи çине тăратса вĕсемпе йунашар пырса тăратй*).

Отрет пуçлăхĕ (*Иљаккана хут парса*). Раволјутси саккунĕ тăрăх, сан пурлăхна халăх пурлăхĕ тăватпăр. Çавăнпа пайан санăн килне, армануна епĕр пĕтĕмпе ухтаратпăр.

Иљакка (*йăлăнса*). Сийен ан ту мана комиссар! *Ӳксе пуççапатй урине тытса ђуп-тăвасшăн.*

Халăх хушшинђи сасăсем. Ха! сийен ан ту! тет. Тытса çапмалла ăна!

Тепĕр сасă. Çапмалла! Пырши-пакки тухса кайтăр!

Отрет пуçлăхĕ. (*Иљаккана ураран тытасран пăрăнса*). Епĕ мар, пире халăх ђĕннĕ! Саккун çапла хушатй.

Йакур. Есĕ хĕсĕрлесе мăшкăласа пурăннă çынсен çилли çитрĕ сана! Çакă ĕнтĕ вăл—револјутси алли!

Отрет пуçлăхĕ (*салтаксене*). Хуçисене карташне илсе кайăр та, мĕн пур хуралта, пахђана, нӳхреп-путвал таврашсене пĕтĕмпех ухтарăр! Сирĕлĕр халăх! *Иљаккапа Наçтаçа малтан уттарса имĕ тухса кайаççĕ. Пурте Иљакка хыççăн тĕпĕртетсе, шăхăрса, ахăрса алăк патĕнђен çухалаççĕ. Йулашкин-*

*ҫен отрет пуҫлăхĕ те тухат. Йакурпа Кеорки ҫеҫ йулаҫҫĕ*).

Йакур (*Кеорки патне пырса*). Ђирлерĕним? (*патне ўҫат*). Е-е-е ђирлемелле ҫав! (*тăрăхланă сасăпа*). Ыран прийома каймалла та, ђирлес пулаť.

Кеорки (*тарăхса*) Кай кунтан! (*Питне утийал-па хуплат*).

Йакур (*Кеорки питне тепĕр хут уҫса*). Сисрĕм епĕ... Епĕр салтака кайсан, есĕ хĕрсем хушшинђе пĕђђенех йуласшăн... Ҫын савнисене ху майлă ҫавrасшăн.

Кеорки. Мĕн кирлĕ сана? Тухса кай! Кайах... пирĕн мула ҫаратма!

Йакур (*уткаласа ҫўрсе*). Сирĕн мулу мана ђĕрне хури тăрăшшĕ те кирлĕ мар.

Кеорки. Кирлĕ мартан килтĕни-ха?

Йакур (*ҫаплах уткаласа*). Епĕ сирĕн мула ђухăнсене ҫех парасшăн, мĕншĕн тесен - сирĕн аҫу ђухăнсен вăйĕпе пуйнă. Епĕ... епĕ мана Праҫҫи пĕр сăмах каланăранпа, мулсăрах пуйан!

Кеорки (*тăрса ларса, хĕрўллĕн*). Ан суй! Мĕн мухтанса ҫўретĕн Праҫҫи сана, кĕлмĕҫе, нихăҫан та кађђа пырас ҫук!

Йакур (*ҫаплах уткаласа*). Пырас ҫуккине курăпăрха... Хĕрлĕ ҫартан тавăрăнсанах епĕ Праҫҫине кађђа илетĕп.

Кеорки (*ҫун хавалĕпе*). Суйатăн! Тăшман!

Йакур (*Кеорки тĕлне ђарăнса тăрса*). Епĕ мар

сан тăшману. Санăн тăшману ђăн та пур. Вăл Праççине сантан сивĕтнĕ... Епĕ мар.

Кеорки (*Кăшкăрса*). Есĕ! Есĕ! Путсĕр çын!

Йакур (*лăпкăн*). Епĕ мар. Сан тăшману кам иккĕнне есĕ Праççирен ыйт. Вăл сана, тен, калĕ (*тухса кайат*).

Кеорки (*минтер çине пуçне ђиксе*). Ех, камши вăл, ман тăшман! Епĕ ăна!... Епĕ ăна касса, ђиксе пăрахăттăм! Пурлăх та шел мар мана!... Праççи, Праççи!... (*ўт-пĕвĕпе ђĕтресе йĕрсе йарат*).

(*Алăк умĕнтђе ура сассисем илтĕнеççĕ. Отрет пуçлăхĕ, икĕ салтак Илђаккапа Настаçа илсе кĕреççĕ*).

Отрет пуçлăхĕ (*кĕрсе*). Килте ухтарса пĕтерђђĕр те, армана кайăпăр (*сĕтел хушшине ларса, панкине уçса çырат*). Ну, Илђакка! Шикли шикленет, кĕрĕкли пĕркенет, теççĕ. Çавăн пекçке есĕ те. Хăна ху шикленсе мĕн ђухлĕ пурлăх пытарнă есĕ!

Илђакка (*тархасланса*). Вуникĕ пин тенкĕ ылтăн укçана та пулин хăвар, комиссар! (*ўксе пуççапат*). Турă пек пул маншăн! Пĕтĕмпех çука ан хăварсам!

Отрет пуçлăхĕ. Тупнă йапаласене пĕрне те сана хăварма пултараймастăп, старик!

Илђакка. Ах, комиссар, комиссар! Хĕрхен мана! (*татах ўксе пуççапат*).

Отрет пуçлăхĕ. (*Сĕтел хушшинтђен тăрса, кантăк карнине, кантăка уççе*). Халăх! Йулташсем! Илђакканăн мĕн пур пурлăхĕ патшалăх, халăх аллине пулат!

Урамран сасăсем. Ђухăнсене, тăлăх туратсене пултăр!

Отрет пуçлăхĕ. Иљакканăн ĕмĕрлĕхе илнĕ 34 теçеттин çĕрĕпе армане́, килçурђĕ халăха йулаŤ, тырри-пуллине хĕрлĕ çар вађљи йарăпăр!

Урамри сасăсем. Тĕрĕс! аван тунă! Иљакка çĕрĕ çинђе ђухăнсем комунлă хуçайствă туђђăр! Çуртне вуламалли, халăх çурђĕ тăвăпăр!

Иљакка (*йĕрсе йарсă*). Ах, комиссар, комиссар! Пĕтертĕнçке есĕ мана!

Отрет пуçлăхĕ. (*Настаçпа Иљаккана*). Сире урăх арĕслесе тăратмăпăр. (*Салтаксем тухса кайаççĕ*). Есĕ, хĕрарăм, старик вађљи йапаласем хатĕрле; епĕ Иљаккана Хусана ирĕксĕрлесе ĕçлеме виçĕ уйăхлăха йаратăп. (*Настаç тула йапаласем хатĕрлеме тухса кайаŤ. Иљакка отрет пуçлăхĕ патне пырса каллех пуççапса*).

Иљакка. Хĕрхен, мана, комиссар! Ку çурта халăх аллине парсан, манăн ăçта пурăнас? (*йĕрет*).

Отрет пуçлăхĕ. (*Иљаккаран пăрăнса*). Кирлĕ маррипе ан хăтлан, старик. Ан пуççап мана... Хăвăра пурăнма çак пӳлĕм пулаŤ сире. Хатĕрлен, тепĕр çур сехетрен сана Хусана йаратăп. (*Хăй портфĕлне илсе тухса кайаŤ*).

Настаç (*кутамккана йапаласем тултарнă, кĕрет*). Иљакка пиђђе! Ђăмаппи çармăс килнĕ! Лешĕ, пирĕн Кронита шуррисем патне леçме пулни!

Иљакка. Кĕтĕр хăвăртрах! Кала! Кронит мĕнле

те пулин хыпар йанӑ пуЉ. Пӗрик ернеренех кӗтеттѐм-ха Ђӑмаппине...

Настаç (*алӑк патне пырса*). Кӗр Ђӑмаппи! Салтаксем çук кунта, ан хӑра! (*Хӑй артЉаран кӗпе-йӗм, питиӑллисем кӑлара-кӑлара тӗркелесе кутамккана Љикме тытӑнат*).

Ђӑмаппи (*кӗрет*). Килсех калас терӗм... (*Салтӑнмасӑрах сак çине иртсе ларат*).

ИЉакка. Мӗн хыпар пур, Ђӑмаппи! Шуррисем айӑкраи? Кронита куртӑни?

Ђӑмаппи (*тытӑнкӑллӑ калаçат*). Курасси куртӑм та...

ИЉакка (*Ђӑмаппипе йунашар пырса ларса*). Атӑл урлӑ каçнӑ Ђух хӗрлисем курмарӗçи? тытмарӗçи?

Ђӑмаппи. Çу-ук! Епӗ Кронита кӑмпа пухма кайакан старик тунӑ вӗт. Кунтан кайнӑ кунах епӗ Кронита Атӑл урлӑ каçарса Çеленнӑй Тола ӑсатрӑм та...

ИЉакка. Ђипер ӑсатнӑ пулсан йуратӑ. Ех! Ђӑмаппи! Пайан пире турӑ тем çылӑхшӑн сийен йаЂӗçке! (*пуçне тытса йӗрсе*). Пӗтӗмпе... Пӗтӗмпех çаратрӗç.

Ђӑмаппи. Епӗ те ырripex килмерӗмха, сирӗн пата, ИЉакка тус! Кронит... виллине... Вӑрманта туп-туп-рӑмӑр.

ИЉаккапа Настаç. (*Харӑс*) Ай тур! пӗтрӗмӗр! (*уласа йӗрсе йараççӗ*).

Кеорки (*питне уçса тăрса ларса*). Кронит вилнĕ тет? Ăçта? Кам?

Ђăмаппи. Такам вĕлернĕ. Хĕрлисем пуђ... Çавăнпа килсех калас терĕм... Лаша тăрасшăнах мар (*кантăкран пăхса*) татса кайасшăн. Кайманха! Çиленсе ан йулăр! (*тухса кайат*).

Кеорки. Ех, Атте! Кронита шуррисем патне есĕ пит йарасшăн пултăн (*утийалне пĕркенсе выртат*).

Иђакка (*йĕре-йĕре*). Краçис, Шупашкарти Краçис ухвитсерсене вĕлерет терĕç те... пуйан ывăлĕсене... вĕлерет терĕç те... Шуррисене пулăшу пултăр терĕм.

Настаç (*йĕре йĕре*). Пĕтрĕ мăнтарăн ађи! Хăй кайасшăн марђђĕ. (*Иђаккана*) Есĕ вĕт, шуррисем çĕнтереççĕ тесе Кронита çавсем патне йатăн! (*Кутамккана алăк патнелле илсе пырса хурат те, сĕтел çине ӳксе йĕрет*).

Салтак (*алăка уçса пăхса*). Ђасрах тух старик! Кайма тухрăмăр! (*Алăка хупат*).

Иђакка (*йĕре-йĕре*). Ах, Кронит вилнĕ... Пурлăха çаратрĕç! Ман тăшмансем, мана кураймансем хĕпĕртерĕç, савăнђĕç ĕнтĕ. Иђакка пĕтрĕ, тĕп пулђĕ, терĕç пуђ. Анђах... Кеорки пурха. Кеорки—ђĕрĕ тымар. Вăл пур çинђе сын айне кĕмĕпха, сын хури пулмăпăр! (*турăш умнелле тăрса*) Ей тура, тура! ан пăрах мана! Совета пĕтер! Самана ĕлĕкхи майлă çавăрăнсан, ђиркӳве, сана мухтаса, Кеорки попетоностсă сăнне лартăп.

С а л т а к (*алӑк уҫса*). Тух, старик айта!

И љ а к к а (*йулашки хут сӑх-сахса*). Ҫветтуй ҫынсене те нумай асаплантарнӑ. Ҫавӑн пек мана асаплантарма илсе кайаҫҫӗ (*тухса кайат*).

*Ђ а р ш а в.*

## III-мĕш пайĕ.

*Октапĕр револютсийĕ 9 çул тултарса 10-мĕш çине пуснă кун, ирхине*

*Стсенă—иккĕмĕш пайĕнчи пÿлĕмех. Ытти пÿлĕмсене кĕрсе çÿремелли алăк çине шултра саспаллисемпе: „Читтальнă. Комсомол йачĕллĕ пионер отречĕн клупĕ„ тесе çырнă хут çапнă. Кеорки урам йенчи вырăн çинче чирлĕ выртат. Хăй шуралса, ырханланса кайнă, аран-аран каласат. Кантăк умĕнче вĕтĕршакăр кĕленчисем—емел кĕленчисем нумай. Кеорки пусĕ тĕлĕнче, урайĕнче сурмалли чÿлмек пур. Настас урай шăлат. Сĕтел çинче Кеорки валли ирхи апат: сĕт, çăварта шурă кулачă пур.*

Кеорки (*вырăнĕ çинче ÿсĕрсе выртса*). Éнертенпе ăшран пĕрмай йун пекки тухаť (*чÿлмеке пуçне çĕклесе сурат*).

Настас (*урай шăлма чарăнса*). Емел ĕçтерем-ха (*кĕленче çинчен емеле кашăк çине йарат те, Кеоркине сыптарат*). Тен çакă çĕнĕ емеле ĕçсен иртсе кайĕ

Кеорки (*ÿсĕрсе*). Иртсе кайаймĕ çав! Иртес пулсан иртмелле те... çу-ук пулĕ...

Настас (*урай шăлма тытăнса*). Ей, апла каластăн ес. Чирлекен пурте вилети? (*шăлат*).

Кеорки (*хурлăхлă сăсăпа*) Прасси мана качча килнĕ пулсан, тен, кун пекех чирлемĕттĕм епĕ. Çав Прасси манран сивĕнни пĕтерчĕ мана...

Н а ç т а ç. Праççисĕр хĕр çуки? Мĕн унпалах пĕр май супатăн? Сывалхa. Сывалсан, Праççи пеккине мар çаклатăн. Есĕ—ĕлĕкхи пуйан ывăлĕ вĕт. Халĕ те аçу вак-тĕвек сутти лавки тытать, пуйан пурăнатпăр вĕт.

К е о р к и. Йакур 5—6 çул хушши хĕрлĕ çара кайсан киле тавăрăнмасăр пурăнђĕ. Çав хушăра епĕ темĕн ђул Праççине тепĕр хут хам майлă çавăрас тесе тăрăшрăм, усси пулмарĕ.

Н а ç т а ç (*урай шăлса пĕтерсе*). Апатне çимерĕнçке, çийетĕни?

К е о р к и. Çийес килмест, илсе кай. Ех, çав Праççи манран сивĕннине шухăшласан, пĕтĕм ђун тарăхать. Кам сивĕтрĕши ăна? Камши ман тăшман? Хам тăшмана вĕлмесĕр вилес марђђĕ. Тăшмана манăн пĕтересђĕ.

Н а ç т а ç (*апатсене сĕтел çинђен пуçтарса*). Праççирен ыйтмани есĕ ху тăшману каммине?

К е о р к и. Темиçе хут ыйтсан та, каламарĕ. Пĕрре каларĕ: кађђа кайсан калăпха, терĕ.

Н а ç т а ç (*сĕтел шăлса*). Çав Праççи çинђен шухăшлама пăрах, есĕ! Хăна ху шухăшласа ђуна ватни çеç вăл.

Кеорки (*кăкрине тытса, йăвăррăн сывласа.*) Ђире те çав Праççине пула йерсе кайрăм. Салтакран йулса Праççине илес тесе Пахтиара пăстартăм... Пĕтерђĕ мана Пахтиар емелĕ.Тăратса лартха Наçтаç! Сывлăш тухмасть.

Н а ç т а ç (*Кеоркине çĕклесе тăратса лартать, çте-*

*на çумне миттер хĕстерсе Кеоркине тайăнтарать*). Пит ан хуйхăр, Кеорки. Хуйхăрсан ђир пушшех пулаť. Пахтиар пăсни сана пысăк сийенех туман пулĕ. Унтан кайран есĕ сывă çын пекех çӳреренĕнçке.

Кеорки (*ӳсĕрсе*). Çӳрессиçӳренĕ те, пăснă хыç-çăн манăн йаланах ăшђик ыратса çӳрерĕ (*ӳсĕрсе тӳлмеке сурать, Наçтаç Кеорки сурнă ђух тытса тăрать*).

Наçтаç. Асту, ӳке ан пар.

Кеорки (*сурса*). Веç, ав, хĕп-хĕрлĕ йун.

Наçтаç. Вырг ĕнтĕ (*выртарать*). Аçу вĕт, сана пăсасшăн çунђĕ. Пахтиара икĕ хутђен каласа йађĕ.

Кеорки. Атте çав. Пăсăлман пулсан, епĕ те сынсемпекех хĕрлĕ çара кайса килнĕ пулăттăм. Мана халĕ никам та: хĕрлĕ çара кайасран хăйне хăй пăснăскер, тесе каласа мăшкăламан пулĕђђĕ.

Наçтаç. Мăшкăлани вăл ђирех марха.

Кеорки (*тарăхса*). Кулак... пуршуй, çимуљант тени пит ђĕрене тивет. Ах, Наçтаç! Ман ђун аттенĕн пек мулпа хытман çав. Манăн çынсемпе пĕрле, çынсем пек пулса пурăнас килет. Хăш ђух епĕ: мĕншĕн епĕр пуйан пулнăши? тесе темĕн ђул та тарăхатăп. Уçха кантăка! Сывлăш тухмаcť!

Наçтаç (*кантăка уçса*). Асту, ан шăн. Пайан есĕ ытла нумай калаçатăн. (*Кеоркине утийалпа авантарах витет*).

Кеорки (*тăма хăтланса*). Ларас килет. Урамалла пăхасђĕ.

Наçтаç (*Кеоркине тепĕр хут çĕклесе тăратса*

*лартат, хăй пĕр йентђен тытса тăрат*). Асту, сивĕ пулсанах кала.

Кеорки (*урамалла пăхса*). Сывлăџ уçă. Çанталăкĕ сизех мар пайан. Ех, халăх урамра вĕркĕшет. Пионерсем, комсомолĕссем... Пайан праçник вĕт. Октăпĕр револђутсийĕ 9 çул тултарса 10-мĕш çул çине кайнине уйавлаççĕ.

Наçтаç. Нумай ан пăх. Вĕрĕлсе кайăн. Хупас пуљ кантăка. (*Хăрах аллипе кантăка хупма хăтланат*).

Кеорки (*Наçтаçа тђарса*). Ах, ан хупха! Пăхам куç тăраниђђен (*татах урамалла пăхса*). Ав копператтив çурђĕ çинђе хĕрлĕ йалав. Илемлĕн вĕл, вĕл вĕçкелесе тăрат. Ак Йакурпа Праççи колхос килĕнђен тухса копператтив çурђĕ патне пыђĕç. Ах, Праççи, Праççи! Саншăн çак пўртре кам çунса ларнине пĕлместĕнçке, есĕ. Ех, мĕнле тăшман манран сана сивĕтрĕши?

Наçтаç (*кăмăлсăрланса*). Каллех çав Праççипе аташа пуçларăн. Çитет ĕнтĕ, хупас кантăка. Епĕ сана тытса тăрса ывăнтăм. (*Кантăка хупма хăтланат*).

Кеорки. Ђимха, ку тата, авантумланнăскер, кам?

Наçтаç (*вăл та урамалла пăхса*). Кам?—Лексантăр, Праççи шăлнĕ.

Кеорки. Е-е-е Лексантăр. Вăл акронома вĕренсе тухнă теççĕ.

Наçтаç. Вырт ĕнтĕ. Ку Совет влаçĕпе ним мар çынсемех шутлă çынсем пулса тăђĕç.

Кеорки (*хурлăхлă*). Епĕр шутран тухрăмăр,

çынсен пайан праçник, пирĕн... ех, мĕншĕн епĕ те ђухăн çын ывăлĕ пулманши?

Н а ç т а ç. Кай, ан аташса лар (*кантăка хупса лартат, Кеоркине вырmарат. Хăй кăнђала арлама çак ђине кайса ларат*).

И љ а к к а (*кĕрет, çилĕллĕ, хăй ăшĕнђе мăкăртатса туммирне пăтана çакат*). Ха, хм... Праçник теççĕ пуђ. Пĕтĕм ухмах халăх урама тухнă... Мĕн праçник типтерĕ пур? Ни ђиркĕве каймаççĕ, ни турăшсемпе ђан çапса çӳремеççĕ... Хĕрлĕ йалав тавrашне курас килмест ман...

К е о р к и. Çĕнĕ пурнăçăн праçникĕ те çĕнĕлле.

И љ а к к а (*ывăлĕ патнерех пуканпа пырса ларса*). Пăхмалли те нимĕн те çук унта, вĕрĕлесси пулĕ. Йун пекки ђарăнђĕи?

Н а ç т а ç. Çук, ĕнерхи пекех.

И љ а к к а. Хусанти сопора вунă тенкĕлĕх çурта кайса лартсан ђĕрĕлĕн, тетĕп теха.

К е о р к и (*хурлăхлă*). Çĕр тенкĕлĕх çурта лартсан та, сываласси пулмасť пуђ, ĕнтĕ.

И љ а к к а. Ек-кай, какуй. Мĕнле есĕ турра кӳрентерсе калаçатăн. Турă çавăнпа сывлăх памасť сана.

К е о р к и. Тепĕр каласан, мĕн тăвас манăн сывалса? Кашни çын пире ĕлĕкхипе тĕртет: кулак пуршуй, контреволђутсионер (*тарăхса*). Ах, атте! Çынсем ђиперех пурăнаççĕ, епĕрех хыçала йултăмăр.

И љ а к к а. Турă парсан епĕр те пурăнăпăрха.

К е о р к и (*хыттăн*). Турă нимĕн те памарĕха пирĕншĕн. Есĕ ыйтнине пĕрне те памарĕ.

Иљакка. Паратӑ акӑ. Епӗ турӑран икӗ ырӑлӑх кӑна кӗтетӗп. Пӗри—есӗ сӑваласси, тепри—самана ӗлӗкхи майлӑ пуласси. Ђӑн пӑсӑк ырлӑх халӗ маншӑн есӗ сываласси... Совет влаҫӗ вӑл хӑйех майӗпе пӗтӗха.

Кеорки (*аллине сӗлтсе*). Ей, калаҫатӑн, атте, кирлӗ маррине. Совет влаҫӗ пӗтмест ӗнтӗ вӑл. Ав ҫӗнӗ пурӑнӑҫ мӗнле тӗреклӗленет. Пирӗн йалтах копператтив, комунла хуҫайствӑ пур. Армана електритсӑ стантси лартаҫҫӗ, тет. Пирӗн пӳртех, ђиттаљнӑна, хаљ ратио лартрӗҫ. Октӑпӗр ҫӗнтерсе пыратӑ.

Иљакка (*кӑмӑлсӑрланса*). Есӗ ађам выртнӑ ҫӗртех комуниса тухса кайнӑ.

(*Пионерсем виҫҫӗн тултан кӗрекен алӑка уҫаҫҫӗ те пӑхаҫҫӗ. Иљаккана курсан каллах хупаҫҫӗ*).

Иљакка (*пукан ҫинтђен тӑрса кайса*), Курас килмест ҫав вӗтӗр-шакӑра. Кунта ђиттаљнӑра кӗшӗлтетсе ҫӳренине йуратас килмест. Тапса сиктерес килет.

(*Пионерсем тата уҫса пӑхаҫҫӗ те, Иљакка ҫине шикленсе пӑхса ђиттаљнӑна кӗрсе кайаҫҫӗ*).

Иљакка (*тумланса*). Ӑҫталла та пулин тухса ҫӳрес пуљ. Пайан ларас-тӑрас килмест... ӑш ваӑркатӑ (*тумланса тухса кайатӑ*.

(*Пионерсем ђиттаљнӑран хӗрлӗ йалав, параппан илсе тухаҫҫӗ*).

Кеорки (*пионерсене ӑшшӑн пӑхса*). Кунта, клупа пухӑнатӑри есӗр?

Пӗр пионер. Кунта (*тухса кайаҫҫӗ*).

Кеорки Ах, мĕн савăнса çӳремеççĕ çав ађасем! (*Урамра параппан сасси илтĕнет*).

Настас (*кантăкран пăхса*). Акă копператтив çурђĕ тĕлне пионерсем пухăнма тытăнђĕç. Халăх та пĕр çĕререх пионерсем патнелле, ђăмăртанаť. Комунри хĕрарăмсем кунталла васкаса утаççĕ.

Кеорки. Ђиттаљнăра ђаплă лару пулаť. Каçхине çпектаккăљ выљаççĕ пуљ... ратио. Мĕн тĕрлĕ ырă хаљхи çамрăксене.

Настас. Ађи-пăђи, хĕрупраçĕ пĕтĕмпе тенĕ пекех комсомолта, вăхăта пĕрлех иртереççĕ çав. Çпектаккăлне епĕр те кĕрсе курăпăрха.

(*Комунри хĕрарăмсем кĕреççĕ. Пурте тирпейлĕ, аван тумланнă. Марик инке малтан кĕрет*).

Марик инке. Ђиттаљнăна халâх кĕрсе тулаťђен епĕр кĕрсе тăрас терĕмĕр. Вара, халăх пухăнсан, кĕме тăвăр пулаť. (*Ытти хĕрарăмсем ђиттаљнăна кĕрсе кайаççĕ, Марик инке Кеорки патнелле пырса тăраť*). Кеорки халĕ те сывалайманçке.

Настас. Сывалаймарĕ çав. Лар, Марик инке! (*пукан параť. Марик инке лараť*).

Марик инке. Мана палларăни, Кеорки?

Кеорки. Палларăмçке, Марик инке. Манăн тăн пур, вăй кăна çукрах. Мĕнле пурăнатăрха комунра? Прасси мĕнле?

Марик инке. Комунра пурăнăç аван унта. Йашки-çăкри йаланах çителĕклĕ, тумтир таврашĕсем туйантăмăр.

Настас. Сирĕн унта пурăнăç пуйан çынсенђен

те аван: тырă вырасси, авăн çапасси пётёмпех машшинăпа ёçлетёр.

Марик инке. Калама та çук аван. Спаççипă ку çёнё саманана, тетёп вара. Ватăлмаллăх кунта епёр те, тăлăх-туратсем, ђухăнсем ырă пурăнăç куртăмăр.

Кеорки. Електритсă хăçан çутатакан пулатха, сирён?

Марик инке. Пайанхи праçник вађђи çутатмалла тăвас тетђёç те, хатёрсем кăшт çитеймен терёç, пулаймарё.

*Урамра пыраппан сассипе йурлани илтёнсе кайат. Малтан айаккарах илтёнет, вара, пионерсем çывăхарнă çемён хытăрах илтёнет. Йурри Йевтоккимăв çырнă „пионер йурри“ — „Журавушка журавель“ кёввипе йурлаççё).*

Кеорки (*хавассăн*). Пионерсем килеççё.

Марик инке (*пукан çинђен тăрса*). Кёрес пуђ. Сывал ађам (*Кеорки пуç айёнђи минтерне пырса кăшт хăпартласа*) хăварат те, кайасшăн тăрат*).

Кеорки. Ан кай-ха, Марик инке, Праççи çинђен нимён те шарламарăнçке.

Марик инке (*тепёр хут Кеорки вырăнё патне пырса*). Праççи те, Лексантăр та сывах-ха, аван. Праççи Кайри-касри хёрарăмсем хушшинђе ёçлет.

Наçтаç. Сирён Праççи вётха Кайри-касра ёç вăхăтёнђе пёђёк ађасене пăхмалли йаçлё уçнă.

*) Пирён йенђе ђирлё çынна сывлăх суиса унăн минтерне хăпартлаççё.

Марик инке. Праççипе кĕрӳ иккĕшĕ те ун пек ĕççемпе аппаланма йуратаççĕ.

Кеорки (*тĕлĕнсе*). Мĕнле кĕрӳ? Ка-ам?

Марик инке. Ара, Праççи Йакура кађђа кайнă вĕт пирĕн. Виçĕмкун çыранђĕç. Пайан, праçник майĕпе, кăшт хăнасем ђĕнес тетпĕр—туй пекки пултăр. Пурте пĕр комунра пурăнатпăр... Йакур аван çын терĕм...

Кеорки (*пит хурлăхлă*). Праççи кађђа кайрĕ еппин. (*Утийалпа пуç çинтђен пĕркенет*).

Марик инке. Кайам-ха, сывă пулăр.

Наçтаç. Ӳлĕмрен килсе лар, Марик инке.

Марик инке (*Ђитталънăна кĕрсе кайнă тђух*). Ĕпĕ килĕп. Хăвăр пирĕн комуна нихăçан та пымастăр, пырса курăр.

Наçтаç (*Кеорки патне хыпаланса пырса, питне уçса*). Ĕсĕ мĕн, Кеорки!? Татах йĕретĕн-и?

Кеорки (*пит хурлăхлă*). Кăмăл хуçăлђĕ, Наçтаç. Йакура пур çĕртрен те телей: парттире тăнипе ăна пурте хисеплеççĕ, ВĔК пуçлăхне халăх суйларĕ. Комун хуçайствине пĕрик çул хушшинђе аванлатса йађĕ... Праççине кађђа илђĕ. Ех! мĕн савăнса пурăнмасть çав Йакур... Епĕ....

Наçтаç (*кăмака умĕнтђен сĕт илсе пырса*). Сĕт ĕçха. Ĕнтĕ каллех пĕђĕк ађа пек тытăнтăн пуљ... ĕсĕклеме. Çын кусси ăçта кусатăн? Ĕçха, ĕç!

Кеорки. Ĕçместĕп... Праççи пайан ђитталънăна килместши?

Наçтаç (*сĕте кайса лартса*). Килет пулĕçке

(*кантăкран пăхса*). Веç ав халăх пионерсемпе комсомолĕссем хыççăн кунталла килет. Праççи те пур мари унта? Пур! Йакур, Лексантр, виçĕшĕ пĕрле пыраççĕ.

Кеорки. Праççине мĕнле те пулин пĕђђен хăварса пĕрик сăмах калаçасђĕ. Настас, есĕ Праççине ун çинђен систерха.

Настас. Йурĕ, йурĕ, вырт ђипер. (*Каллех кĕнтђеле авăрлама кайса ларат*).

*Пионер отретђĕ йалавпа, параппанпа паçăрхи йуррăн вĕçне йантратса йурласа кĕрет.*

*Тап, тап, çирĕп ут,*

*Мĕн пур пуйан пире йут.*

*тесе йурласа пĕтернĕ çемĕн тђиттаљнăна кĕрсе кайаççĕ. Вĕсем хыççăн йал çамрăкĕсем: хĕрупраç, атђасем, халăх кĕрет. Халăхпа пĕрле кăшт кайарах Праççи, Йакур, Лексантр кĕреççĕ. Настас Праççине çынсем куритђтђен хулĕнтђен кăшт пырса тĕкет.*

Праççи (*тђарăнса тăрса*). Мĕн?

Настас (*шăппăнтарах*). Нађаслăха йулха! (*Халăхпа пĕрле Йакурпа Лексантр кĕрсе кайаççĕ, Праççи йулат*).

Кеорки (*тăма хăтланса*). Ах, Праççи! Сана курмасăр вилес мар теттĕм... (*йĕрсе йарат*).

Праççи (*Кеорки патнелле пырса*). Ан йĕр, Кеорки, сывалăнха.

Кеорки (*йĕме тђарăнмасăр*). Епĕ сываласшăн мар. Халĕ ĕнтĕ мана сывлăх мĕне кирлĕ: есĕ... манăн... арăм... пулмарăн.

(*Ђиттаљнăран, шăт хупăнман алăк хушшинђен Интернатсионал йурлани илтĕнсе кайат*).

Прассi. Кайас пуљ (*тљиттаљнă алăк патнелле пырат*).

Кеорки (*йăлăнса*). Прассi ан кайха. Тăраниђђен курам сана. (*Интернатсионал йурланине кăшт итлесе тăрса*). Мĕншĕн ытлаваскатăн? Сĕнĕ пурнăсăн илемлĕ йуррийĕ кунтан та пурĕпĕрех илтĕнетске.

Прассi (*тљиттаљнă алăк патĕнђен каллех Кеорки патне пырса тăрат*). Кăшт тăрамха еппин.

Настас. Пит ан хуйхăр, Кеорки! Хуйхăрсан ђир пушшех йăвăрланат!

Кеорки. Ан ђарха, Настас. Прассипе каласса ђуна кантарам (*тăма хăтланса, Прассi сине пăхса*). Прассi калаха ĕнтĕ, кам сана манран сивĕтрĕ, кам вăл ман тăшман? хăвăн упăшку Йакур мари?

Прассi. Сук. Йакур мар. Асу – Иљакка пиђђе мана сантан сивĕтрĕ.

Кеорки (*куљанса, тĕлĕнсе*). Атте, атте манăн тăшман! Мĕнле пулнăши вăл?

Прассi. Пĕрре Иљакка пиђђе пирĕн пата пынă... Аскăн шухăшпа пынă вăл... Ман ывăл сана кађђа илес сук. Епĕ сана кĕлмĕс хĕрне, киле кӳртмĕп, терĕ. Намăс сăмахсем каласа пĕтерђĕ мана...

Кеорки. Ех, атте, атте! Акă ăста пулнă манăн тăшман! Прассi! Прассi! (*йĕрет*). (*Интернатсионал йурлаćл пĕтересçĕ, Прассi тљиттаљнă алăкĕ патне васкаса пырат те, алăка шат хупса кĕрсе кайат. Ђиттаљнăра ним сасă та илтĕнми пулат.*

Настас (*каллех сĕт илсе пырса*). Кеорки, ан хуйхăр, лăплан! Сĕт ĕçха!

Кеорки (*йĕме ђарăнса*). Кирлĕ мар мана сĕт. Итлеха Настас. Алăк умĕнђи ђăланта кĕтесре пăрахăç атă кунђи выртаť. Çав атă кунђи ăшне епĕ Кронит Кавкасран илсе килнĕ киншала пытарнăђђĕ. Кайса илха çав киншала.

Настас. Мĕн тăватăн киншалпа?

Кеорки (*тарăхнă сасăпа*). Кайса ил, теççĕ сана!

Настас. Кайса илес пуђ еппин (*тухса кайат*).

Кеорки (*кăшт пуçне çĕклесе*). Аттене—тăшмана ђиксе прахам. Киншал çивĕђ... Ман пурнăçра тăван аттех тăшман пулђĕ. Аттене пула епĕ çак çĕнĕ пунăçра прахăç çын пултăм. Вĕлеретĕп килсе кĕрсенех вĕлеретĕп! (*ўсĕрсе йарса ђўлмеке сурат*). Ех, йунĕ пĕр майах тухаť...

Настас (*киншала саппун айне тытсе кĕрет*). Ђăн та пур мĕн. Сакăр-тăхăр çул выртса та пĕрре те тутăхман.

Кеорки. Пар кунта! (*Настас киншала Кеоркине параť. Кеорки ăна утийал айне ђикет. Настас кĕнђеле арлама тытăнаť.*

Илђакка сасси (*карташĕнђен кĕнĕ ђух йатлаçни илтĕнет).* Шуйттан етемми, Йакур! Çурта Ентрейалсене ђайнăй тума сутас теттĕм. Кайалла илме советран темиçе хутђен те ыйтрăм, çук памаççĕ. Çав путсĕр Йакур мана çурта кайалла парас маршăн пит çине тăраť. Ах ку Йакура! Хăçан пĕтĕ-ши ку Совет! (*хуллен кĕрет, туптирне хывса*

*çакат. Кеорки ашшĕ кĕрсенех ăна сиввĕн. шăтарас пек пăхса выртатъ те, ашшĕ ун патне пукан илсе çывхарах ларсанах сасартăк хайаррăн çухăрса йарса ашшĕне киншалпа тъикме тапăнатъ).*

Кеорки. Атте! Тăшман! Вил, есĕ вил! (*ашшĕне тъикме киншала çӳлелле çĕклет*).

Иљакка (*хăраса кайса, аллисене кăнтарса*). Мĕн, мĕн тăватăн, Кеорки!? (*сиксе тăр ;а тухсатарасшăн васкат*).

Настас (*кĕнтъелине сирпĕтсе йарса*). Ах тур, тур, Кеорки! (*тъупса пыратъ, Кеорки киншалне тытса илме хăтланатъ*).

Кеорки (*пĕтĕм вăйĕпе тăрса ларасшăн турткаланнă çĕртех йăванса кайатъ, киншалне çĕре ӳкерет*). Вил, вил тăшман! (*çавăнтах сывлăшсăр пулса хăрлатма тытăнатъ*).

Настас (*Кеоркине тытса*). Ай, вилетçке, вилет!

Иљакка (*тъупса пырса*) Мĕн, мĕн пулђĕ?!

Настас (*Кеоркине пуçĕнтъен çĕклесе*). Виле пуçларĕ вĕт!

Иљакка. Ђуп хăвăртрах пађăшкă патне!

(*Кеорки турткаланшма сайрарах сывлама тытăнатъ*).

Настас. Вилет пулĕçке, вилет пуљ. Ах тур! Мĕн тăвас?! (*йĕре йĕре тъупса тухса кайатъ*).

Иљакка (*Емел йухтарса кашăкпа Кеоркине сыптаратъ*). Ĕçха, Кеорки, ĕç! (*емеле сĕтел çине лартса*). Ĕçмест, вилет! (*турăш умне тăрса, хăвăрттăн сăхсăхса*) Ей турă! ђĕртсем ывăлăма! Вилмелле ан ту! (*Кеорки патне тъупса пырса ури-аллине тытса пăхатъ*).

Турă! Ан пăрах мана! Ђёрт Кеоркине! (*Кеорки хăрлатма тљарăнат—вилет*). Вилет! Вилђё! (*çўçне туртса, хытă тулашса*). А-а-ах! мён тăвасши?! (*ывăлё çине ўксе, уласа йёрсе йарат*). Вилтёнçке, ывăлăм! Ех, Кеорки! Ех, Кронит! Пётрёрçке есёр! Хамах пётертём, сире, ывăлсем. Пурнăç шанђёкё хуçăлђё. Ёнтё тин мана окђапёр пуçпех çёнтерни пулђё. Тёп пултăм ёнтё. Вилесђё, халех вилесђё!.. (*йёме тљарăнса*). Турри те епё ыйтнине памарё. Турă! Тăхăр çул хушши епё сана Совета пётер, окђапёре вăй илме ан пар тесе темён ђухлё те çурта лартрăм, кёлтурăм... Окђапёр вăй илђё. Кеоркине ан вёлер, терём, вилђё. (*Турăш кётессине тискерленсе хайаррăн пăхса*). Турă! Есё епё ыйтнине пёрне те памарăн! Есё çук пекех! Çук пуљ есё! (*Вырăн айёнтљи артљаран турăш кăларса*). Çакна ылтăнласа ђиркўве лартас теттём (*сётел çине хурат*). Х-ха, ку турăшăн пиђё мана çаратма килнё комиссар пиђё пек. (*Тискерён шăлне йёрсе турăш çине пăхсл*). Ха, ха! Тутисем кулнă пек! Кулађ ку! Манран кулађ пуљ! *турăша хыттăн сиплесе*). Кулатăни?! Манрани?! Ман ывăлсем пётнёшён хёпёртерёни?! Йăхё-тёпёпе мана окђапёр тёп тунăшăн савăнтăни?! (*пуçне тытса тулашса*). А-а-ах, окђапёр—тăшман пётерђё мана, çёнтерђё мана! (*турăш кётессине тљышкипе йунаса*). Ех! сана! Епё ыйтнине есё пёрне те параймарăн! Пултараймастăн есё!

*Ђиттаљнă алăкё уçăлаđ те виççён тăваттăн Иљакка тулашнине пăхса тăраççё*).

П ё р и. Мён пулнă Иљаккана? Мён йанрашаť вăл?

Т е п р и. Ухмаха йернĕ пулас вăл.

И љ а к к а. Турă пур, турă пулăшĕ тесе хам ĕмĕре турă ҫине шанса пурăнтăм. Вăл... те пур... те ҫук... Ҫук пекех... Ех, Кеорки, Кронит! Манăн та халех вилесђĕ! (*ҫӳлелле пăхса*). Турă! йулашки хут йăлăнатăп сана, вĕлер мана! Вĕлер мана пайанах, халех! Ҫакăнтах вĕлерсе пăрах! (*ҫӳлелле пăхса кĕтсе тăрать*).

С ы н с е м. Ухмаха йернĕ... Милитсипе тухтăра пĕлтерес пулаť. (*Иљакка ҫывăхне пыма хăраса тăраççĕ*).

И љ а к к а (*тулашса*). Турă! Вĕлерместĕнҫке мана! (*ҫынсем йенелле ҫаврăнса*). Епĕ ухмаха йермен! Пайан хам ĕмĕр ĕмĕр ухмах пулнине пĕлтĕм! (*тђитталђнă алăкĕ йенелле кăтăртса*). Кунта мана... йышăнмаççĕ... Совет пĕтсе... епĕ ирĕккĕн пурнаймарăм... турри памарĕ (*турăн кĕтессинелле йунаса, ҫилĕпе шăлне шатăртаттарса*). Ырлăх та... вилĕм те... пама пултараймастăн иккен! (*сĕтел ҫинтђи турăша йарса илсе*). Пукане!.. Турпас татки!.. (*ҫĕре ҫапса*). Турă комуниссене... шуйттансене... ҫĕнттереймерĕ!.. Октăпĕр ҫĕнтерђĕ!.. (*тискерĕн ахăрса тђупса тухса тарать*).

*Ђаршав*

# Тӳрлетни.

| Стр. | Йĕрке. | Йăнăш çапăнни. | Тĕрĕс вуламалли. |
|---|---|---|---|
| 6 | 12 айал. | Ăпъху! | Ĭху! |
| 8 | 5 çӳл. | Çав çав çу-ук | Çук çав, çу-ук |
| 28 | 11 çӳл. | Кĕçĕр тĕлĕкре çĕрĕпе тупă сасси каймарĕ | Кĕçĕр тĕлĕкре çĕрĕпе тупă сасси хăлхаран каймарĕ |
| 31 | 1 айал. | Сан шухăшлă çынсем —хĕрлĕ çара | Сан шухăшлă çынсем —хĕрлĕ çара кайас мар текенсем мана ъĕнеççĕ, хăйсене пăстараççĕ |
| 37 | 12 айал. | йăсăр. | йăвăр. |
| 38 | 13 айал. | хăраççĕ. | ахăраççĕ. |
| 44 | 5 çӳл. | Кайманха. | Кайамха. |
| 50 | 12 çӳл. | Çĕнĕ пурăнăçăн праçнĕкĕ те çĕнĕлле. | Епĕ те урамалла пăхса лартăмха. Çĕнĕ пурăнăçăн праçникĕ те çĕнĕлле. |

Хакӗ 30 пус.